Сувар

Тутарстан Республикинчи чăвашсен обществăпа политика хаçачĕ

Н.В.Никольский ячĕллĕ преми лауреачĕ (2008),
хаçата Чăваш халăх ăсхакăлпа ÿнер академийĕн
Н.В.Никольский ячĕллĕ орденĕпе наградăланă (2013)

29№ (1325), эрнекун, июль (утă)
уйăхĕн 26-мĕшĕ, 2019 çул

ЙĂЛА-ЙĔРКЕ – ЛАМРАН ЛАМА

Июлĕн 20-мĕшĕнче Мамадыш районĕнчи Зюри ялĕнче кĕрешĕнсен «Питрау» фестивалĕ кăçал 20-мĕш хут иртрĕ. Çулсерен çак ялта иртекен мероприяти хальхинче республикăран, ытти регионсенчен, ют çĕршывсенчен килнĕ 60 пин ытла çынна пуçтарчĕ. Уява ТР Патшалăх Канашĕн Председателĕ, ТР Халăхсен ассамблейин председателĕ Ф.Х.Мухаметшин уçрĕ. «Хамăр республикăри халăхсен уявĕсене кашнинчех хаваспа хутшăнатăп, еплерех чуна парса хатĕрленнинчен, кашнин хăйне евĕрлĕхĕнчен тĕлĕнме пăрахмастăп. Çулран çул кунта хутшăнакан çамрăксен йышĕ ÿсни уйрăмах савăнтарать. Апла-тăк халăхăн асĕнче упраннă йăла-йĕрке малашне те ламран лама куçса пырĕ», – терĕ Фарид Хайруллович.

Çирĕм çул каялла ял уявĕ пек кăна ирттернĕ-тĕк, паян кĕрешĕнсен культурин праçникĕ республика шайне çитнĕ. Вырăссен «Каравонĕ», тутарсен «Сабантуйĕ», чăвашсен «Уявĕ» пекех питĕ чаплă иртет вăл. Хаçатра вулани, телевизорпа курни пĕр япала, кайса курмалла унта.

Ытти массăллă мероприятири пекех, кунта та ача-пăча, фольклор площадкисем ĕçлерĕç. Кĕрешĕнсем те хĕрсен конкурсне ирттерессĕ: кăçал «Кряшен чибяре» конкурса ытти çулсенчи çĕнтерÿçĕсем хутшăнчĕç. Лашасем чупнине те, тĕрлĕ куравсемпе вăйăсем те курма пулчĕ уявра. Çамрăксем валли йĕркеленĕ дискотекăпа тата салютпа вĕçленчĕ тăванла халăхăн хаваслă уявĕ.

Хамăр корр.
Сăнÿкерчĕк ТР Патшалăх Канашĕн пресс-службин.

кĕскен

Мĕнпур сĕт-турăх продукцине 2019 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа «Меркурий» системăна кĕртессĕ. Çапла майпа асăннă апат-çимĕç 100 процент таранах электронлă документ хÿттине кĕрет. Кун пирки Раççей ял хуçалăх надзорĕн Тутарстанри управленийĕн ертÿçин çумĕ Евгений Иванов пĕлтерет. Сĕт продукцине «Меркурий» системăна кĕртни контрафактпа суя апат-çимĕçе потребитель патне çитме чаракан мел те. Унсăр пуçне ăçта та пулин инфекци чирĕ сарăлсан система çийĕнчех вăл ăçтан, хăш производительтен килнине палăртма пултарать.

Тутарстан Республикин инкассаци управленийĕ – РОСИНКАС пĕрлешĕвĕн филиалĕ броньăланă автомобильсен производствине пуçарать. Кун пирки «Татар-информа» управлени пуçлăхĕ Васим Вахитов пĕлтернĕ. Ун сăмахĕсемпе, РОСИНКАС системинче ку енĕпе вĕсем пĕрремĕш. Автомобильсене криминаллă тытăмсем тапăнассинчен броньлă хурçăпа, кĕленчепе, «Пандора» сигнализаципе тивĕçтерессĕ. Унсăр пуçне вĕсене ГЛОНАСС спутник системипе çыхăнтарассĕ. Автомобильте сакăр видеокамерăпа пытаннă микрофонсем пулассĕ. Ку салонра мĕн пулса иртнине йăлт çыртарса пыма май парать. Проекта хута яни тăкаксене самай чакарасса шанассĕ управленире, мĕншĕн тесен ятарлă техника туянмалла пулмасть.

Лăпкă океан флочĕн тĕп базине Ешĕлварти (Тутарстан) М.Горький ячĕллĕ заводра туса кăларнă Вьетнам Тинĕс-çар Вăйĕсен фрегачĕ çитнĕ. Вьетнамăн çар карапĕ пĕрремĕш хут Раççейĕн Тинĕс-çар флочĕн кунне халалланă парада хутшăнать, пĕлтерет РФ Оборона министерствин пресс-службби. «Куанг Чунг» карапа Владивостокра чаплă кĕтсе илнĕ: çăкăр-тăварпа, çĕршывсен гимнĕсемпе. Аса илтеретпĕр, карапа вьетнамсене парассин церемонийĕ 2017 çулхи кĕркунне Ешĕлварта иртнĕччĕ.

Тутарстан Республикин Экологипе çутçанталăк ресурсĕсен министерстви «Чи лайăх эковолонтер отрячĕ» Пĕтĕм Раççей шайĕнчи конкурс пуçарнине пĕлтерет. Унта 10 çул тултарнă гражданенчен пуçласа аслăраххисем тата социаллă экономика проекчĕсем пурнăçланисем хутшăнма пултарассĕ. Конкурса «Вăрман волонтерĕсем», «Заповедниксене пулăшатпăр», «Эковолонтерсем – юханшывсемпе кÿлĕсене», «Хула эковолонтерĕсем», «Çÿп-çапа – çук!» тата «Экокурăм» номинацисемпе заявка пама пулать. Вĕсене сентябрĕн 30-мĕшĕччен йышăнассĕ. Çĕнтерÿçĕсене Мускавра, Экологи вĕрентĕвĕн Пĕтĕм Раççейри конференцийĕнче, октябрĕн 28-31-мĕшĕсенче чыслассĕ.

«СУВАР» ХАÇАТА ШУПАШКАРТА ЧĂВАШ НАЦИ КОНГРЕСĔН ÇУРТĔНЧЕ ТУЯНМА ПУЛАТЬ

ШЫВ ăçта тарнă-ши? 2 стр.

ПАРНЕСЕМ хуçисене кĕтессĕ! 4 стр.

МИХЛЕЕВĂН пурнăçланайман ĕмĕчĕ. 5 стр.

ял хуçалăхĕ

ВЫРМА ПУÇЛАНЧĔ

Тутарстан уй-хирĕсенче ку эрнере вырма пуçланчĕ. Республикăра пĕрремĕшсен йышĕнче Аксу районĕнчи «Аксу Агро» агрофирмăри çĕр ĕçченĕсем те тырпул пухма хире тухрĕç. Чи малтан агрофирмăн «Нива» уйрăмĕнчи урпана çапма пуçларĕç. Пĕрремĕш кунах, июлĕн 23-мĕшĕнче, 40 гектар çинчи тĕш тырра вырса та илчĕç.

Хирте опытлă ĕçченсем вăй хураççĕ. Вĕсен хушшинче ашшĕпе ывăлĕ Алексейпе Дмитрий Кудряшовсем, ашшĕпе ывăлĕ Джаудатпа Джавид Сафиуллинсем, Хусаин Галеевпа Ильшат Зайнуллин, Анатолий Ефремовпа Николай Мулеев, ашшĕпе ывăлĕ Валерипе Максим Ендерюковсем, Анатолий Ильгузинпа Владислав Таиркин комбайнсемпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Ылтăн тĕспе ялтăракан хирте комбайнсем тырă вырнине, машинăсем ăна турттарнине пăхма кăмăллă. Ял хуçалăх предприятийĕн тĕп агрономĕ И.Яруллин каланă тăрăх, урпа гектартан вăтамран 30 центнер ытла тухать.

Тырçи пуçланчĕ. Хирсенче ӳссе çитĕннĕ культурăсене вăхăтлă та çухатмасăр пухса кĕртме çанталăкĕ кăна аван тăтăрччĕ. Çакă халĕ çĕр ĕçченĕшĕн – чи кирли.

Вера АЛЕКСАНДРОВА.
З.Леонтьева сăнӳкерчĕкĕ.

ÇУТĂСĂР, ШЫВСĂР ЯЛСЕМ ТЕ ПУР

Ялсен пысăк проблемисем çумне çул çуккисĕр пуçне çутăпа тата шывпа тивĕçтересси хушăнать. Пысăкрах ялсенче ку ыйтусене татса пама тăрăшаççĕ пулсан, пĕчĕккисем халĕ те пысăк нушара пурăнаççĕ. Власть органĕсен представителĕсем хăйсемех халăх йышлă пурăнакан территорисем приоритетра пулнине, вĕсен ыйтăвĕсене татса панă хыççăн тин сахал киллĕ ялсене тимлĕх уйăрнине калаççĕ. Кун пек çĕрте ытларах ватă çынсем пурăнаççĕ. Çапла ватлăх нуши çумне шыв, çутă çукки хушăнать.

Йывăрлăхсене татса парас тĕллевпе республикăра 2010 çултан пуçласа ТР Президенчĕн йышăнăвĕпе темиçе патшалăх программи пуçарнă. Çавсен шутĕнче яллă районсенче шывпа тивĕçтерессине лайăхлатасси, социаллă пĕлтерĕшлĕ ăшă паракан (котельнăйсем) объектсене юсасси, ăшă паракан системăна харпăр котелсем çине куçарасси, ТБО, СНТ площадкисене лартасси тата техника шывĕпе тивĕçтересси, ялсенче шыв пăрăхĕсен системине çĕнетесси кĕрет. Çулсерен асăннă проектсене пурнăçлама 600 миллион тенке яхăн укса уйăраççĕ. 2010 çултан пуçласа 2019 çулччен шывпа çыхăннă проблемăсене татса пама пурĕ 2 миллиард та 300 миллион тенкĕ тăкакланă. Республикăра çак хушăра пурĕ 300 шыв пуçтармалли башня тунă, 330 скважина чавнă, 2330 километр шыв пăрăхĕсен сетьне тăснă. Сакăр çул хушшинче çутăпа шыв кĕртесси çине пĕтĕмпе 6 миллиард тенкĕ уйăрнă. Кун пирки июлĕн 23-мĕшĕнче «Татар-информăн» черетлĕ пресс-конференцийĕнче Тутарстан Республикин Газификаци, энергие перекетлекен технологисен, тата инженери сечĕсен аталану фончĕн генеральнăй директорĕн çумĕ Евгений Волков пĕлтерчĕ.

2019 çулта патшалăх программипе килĕшӳллĕн, 685 миллион тенкĕлĕх ĕç тума палăртнă. Республикăра шыв пăрăхĕсене тепĕр 213 километр чухлĕ тăсма, 42 башня лартма, 33 артезиан скважини чавма палăртнă. Ку ĕçсем кашни районах пырса тивеççĕ. Плана кӳртнĕ ĕçсене паяна 43 процент таран пурнăçланă. Сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне ĕçсене вĕçлеме палăртнă.

Ялсем çуталнă

2014 çултан пуçласа республика ертӳçисен йышăнăвĕпе ялсене çутăпа тивĕçтерес енĕпе тĕллевлĕ укçа куçарма тытăннă, çулсерен 225 миллион тенкĕ. Евгений Волков пĕлтернĕ тăрăх, программа ĕçлеме пуçланăранпа пурĕ 45 светильник лартнă, ача сачĕсемпе шкулсене – пĕтĕмпе 45 пине яхăн çурта, çутăпа тивĕçтернĕ. 1256 километр пралука çĕннипе улăштарнă. Çак ĕçсене пурнăçлама пĕр миллиард тенке яхăн кирлĕ пулнă.

Ăшăпа тивĕçтересси çинчен калас пулсан, программа ытларах бюджет организацийĕсене пырса тивет. Районсенчи Культура çурчĕсенче, ача сачĕсенче, шкулсенче котелсене улăштарасси активлă пырать. Спикер палăртнă тăрăх, киввисем тахçанах юрăхсăра тухнă. Çĕннисене лартни вара ÇКХ тарифĕсене самай чакарнисĕр пуçне хăрушсăрлăх шайне ӳстерме те пулăшать. 80 миллион тенкĕ каять çулсерен ку мероприятисене. Кăçал котелсем улăштарас енĕпе черетре 64 объект тăрать, 58-шĕнче 111 кивĕ котела илсе пăрахма та ĕлкĕрнĕ. 2005 çултан пуçласа 50 пин ытла хваттер ăшă парассин çĕнĕ системи çине куçнă. Республика бюджетĕнчен çак тĕллевпе 3 миллиард тенкĕ ытла куçарнă.

Шыв ăçта тарнă?

Ялсене шывпа тивĕçтерессин, кăяш шыва тасатассин системине çĕнетесси паяна чи кăткăс ыйтусенчен пĕри пулса тăрать. Шыв ресурсĕсем республикăра пĕр пек пайланман. Хăш-пĕр муниципаллă районта унăн пысăк дефицитне куратпăр. Сăмахран, Çĕпрел районĕ шыв енчен питĕ те чухăн. Шыв пăрăхĕсене вырнаçтарнă пулин те нумай ялта шыв çителĕксĕр, хăш-пĕринче вăхăтран вăхăта ĕçмелли шыв пач пĕтсе ларать. Кĕпе-йĕм çăвасси, мунча хутасси пысăк нушана çаврăнать. Уйрăмах çанталăк типĕ тăнă вăхăтра. Евгений Волков сăмахĕсемпе, кун пек çĕртен çынсенчен проблемăна татса пама нумай çăхав килет иккен. Çĕпрел районĕнче республика ертӳçи Рустам Минниханов хушăвĕпе пысăк ĕç пуçарнă. Кӳршĕллĕ Пăва районĕнчен шыв пăрăхĕсем тăсаççĕ. Çывăх вăхăтра Çĕпрелĕнче шыв проблеми хупăнасса шантарчĕ фондăн генеральнăй директорĕн çумĕ.

Республикăра шыва тасатмалли сооруженисене пурне те совет тапхăрĕнчех тунă. Паллах, норматив докуменчĕсем кивелнĕ. Паян кăяш шыв енĕпе нормативсем питĕ те çивĕч. Спикер сăмахĕсемпе, ĕçмелли шывран та ун пек ыйтмаççĕ. Урăхла каласан, юхса тухакан шыва вăйлăрах тасатма хистеççĕ. Евгений Волков шучĕпе нормативсем пĕр шайра пулмалла. Çавăнпа вĕсем РФ Строительство министерстви патне ĕçмелли шыв пахалăхне ӳстерес сĕнӳпе тухма шутланă.

Паяна республикăра кăяш шыва тасатакан 30 объекта çĕнетнĕ. ТР Президенчĕн йышăнăвĕпе ку программăна финанспа тивĕçтерессине 150 миллионран 421 миллион тенке çитернĕ. Кăçал 20 муниципаллă районти 35 объекта тĕпрен юсама палăртнă, çавсенчен 17-шĕ биологилле тасату сооруженийĕ, 18-шĕ канализаципе насос станцийĕ. Тĕрĕссипе каласан, çак пысăк ĕçсем Атăл юханшывне сыватассипе федераллă проекта йышăнман пулсан тытăнмастчĕç те пулĕ-ха. Тутарстан çак проекта хутшăннине пурте пĕлетпĕр. Çак тĕллевпе федераллă бюджетран 1,2 миллиард тенкĕ куçармалла. Пысăк ĕçсем Елабугăри, Хусанти, Теччĕри тасату сооруженийĕсенче пуçланмалла.

Ирина ТРИФОНОВА.
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

азнакай районĕнче

ÇУТĂКӲЛРИ УЧӲК

Тĕне кĕмен чăвашсем пурăнакан ялсенче юлашки вăхăтра нумай çĕрте Учӳк ирттереççĕ. Çавсенчен курса-вĕренсе пирĕн ялти – Азнакай районĕнчи Çутăкӳлри – активистсем те ку йăлана пурнăçлама шутларĕç.

Утă уйăхĕн 20-мĕшĕнче Чукку усланкине ирех пухăнчĕ ялйыш, шурă сурăх пусса пысăк хурансене ярса пĕçерчĕç. Шӳрпи çине 3-4 тĕрлĕ кĕрпе ярса вĕретрĕç.

Мероприятие йĕркелекенсем ачасемпе аслисем валли тĕрлĕ вăйă-конкурссем йĕркеленĕ. Çавапа курăк çулас енĕпе те ăмăртрĕç çутăкӳлсем, 80 çулти Расиха аппа Пимуллинăна çитекен пулмарĕ ку тĕлĕшпе.

Пăтă пиçсен Ирина Илтимировна мĕнпур ял-йыш ятĕнчен Турра кĕл турĕ. Малтан тутлă пăтта ачасене валеçсе пачĕç, унтан аслисем те тутанчĕç. Пирĕн енче кашăк тытса апат çиме ларсан:

– Ваттисен умĕнче пултăр, – теççĕ.

Ухтияр ИЛЮХИН.
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

элкел районĕнче

ПРАВОСЛАВИ ПРАÇНИКНЕ ХАЛАЛЛАНĂ

Юлашки çулсенче республикăри районсенче ял кунне ирттересси анлă сарăлчĕ, йăлана кĕчĕ тесен тĕрĕсрех пуль. Ăна уявламан ял хутлăхĕсем юлмарĕç пулмалла. Чăваш ялĕсене ку енĕпе çитекенни çук пек туйăнать. Шавлă, хаваслă, çўллĕ шайра йĕркелеççĕ мероприятисене. Нумайăшĕ Шупашкартан паллă эстрада артисчĕсене чĕнсе илме те хал çитерет, теприсем вырăнти пултарулăх ушкăнĕсем тăрăшнипех питĕ пуян концерт программипе тĕлĕнтереççĕ.

Иртнĕ эрне вĕçĕнче Элкел районĕнчи Кивĕ Салман ял хутлăхне кĕрекен Кивĕ Тахтал ялĕнче пурăнакансем те чаплă праçник ирттерсе район халăхне тĕлĕнтернĕ. Кун пирки Элмет районĕнче пурăнакан пирĕн тахçанхи юлташăмăр, «Туслăх» фольклор ансамблĕн ертўçи Виктор Белов пĕлтерчĕ. Ун сăмахĕсемпе, мероприяти çав тери лайăх иртнĕ, халăх кăмăлне кайнă. Июлĕн 21-мĕшĕ Турă Амăшĕн Хусан турăшĕн кунĕ пулнă май, кивтахталсем ял кунне çак православи праçникне халалланă.

Пуçтарăннă ял-йыша саламлама Элкел районĕн Ĕçтăвком председателĕн çумĕ Сергей Балакирев, Кивĕ Салман ял хутлăхĕн пуçлăхĕ Фанил Залялетдинов, Кивĕ Тахталти Турă Амăшĕн Хусан турăшĕн чиркĕвĕн пачăшки Андрей атте килнĕ. Вĕсем пуçтарăннă халăха уявпа саламланă, ырлăхсывлăх суннă. Ĕçре палăрнисене Хисеп тата Тав хучĕсемпе чысланă. Виктор Белова Элкел районĕн пуçлăхĕн Александр Никошинăн йышăнăвĕпе «Элкел муниципаллă районĕн хисеплĕ гражданинĕ» ят парса чысланă. Сумлă ята тивĕçлипе илнĕ вăл. Хăй Элметре пурăнсан та çак чăваш тăван ялĕшĕн тăрăшма пăрахман. Чиркӳ тăвас ĕçе те активлă хутшăннă. Ялта ирттерекен культура мероприятийĕсене пурне те хутшăнма тăрăшать. Ак халĕ те Элметрен пысăк делегаци пуçтарса килнĕ. Унпа пĕрле ЧНКЦ председателĕ Инна Альмукова, «Палан» халăх ансамблĕ килсе çитнĕ. Хапăл туса кĕтсе илнĕ хăнасене кивтахталсем.

Ял кунĕнче йăлана кĕнĕ тăрăх кăçалхи кĕркунне шкула каякансене те парнесем хăварнă. Шел пулин те, ялсенче çулран çул ача шайĕ чакса пырать. Кивĕ Тахталта кăçал пĕр ача кăна шкула каять. Саша Александрова рюкзак парнеленĕ, лайăх вĕренме суннă.

Ял кунĕ православи праçникĕпе пĕр килнипе малтанласа Андрей атте кĕлĕ ирттернĕ, унтан культура программи пуçланнă. «Паланпа» «Туслăх» ансамбльсемсĕр пуçне халăха Пасарлă Матакран килнĕ фольклор ушкăнĕ юрă-ташăпа савăнтарнă. Кивтахталсемпе пĕрле ял кунĕнче кивĕматаксем, туриматаксем, кушкăсем савăннă.

Мероприятие хатĕрлекенсене парăртса хăвармаллах. Вĕсем ĕçлемесен кун пек уяв та пулмĕччĕ. Çавсен хушшинче вырăнти канаш депутачĕ, шкул директорĕ Ирина Ферапонтова, ял хутлăхĕн пуçлăхĕ Фанил Залялетдинов, Виктор Белов тата ыттисем.

Ирина ГОРДЕЕВА.
А.Низамиев сăнӳкерчĕкĕсем.

республикăра

ХУСАНТИ Горький ячĕллĕ паркра июлĕн 26-27-мĕшĕсенче Пĕтĕм тĕнчери урам киновĕн фестивалĕ пулать. Кăмăл пуррисем кунта Раççейре юлашки ултă çулта ўкернĕ кĕске метражлă фильмсем курма пултараççĕ. Асăннă фестиваль Тутарстанăн тĕп хулинче тăваттăмĕш хут иртет. Фестиваль мероприятийĕсем 18 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ, кино вара – 20 сехет те 30 минутран. Тўлевсĕр.

ÇЫРЧАЛЛИНЧЕ пурăнакансем валли скандинави уттин мастер-класĕсене ирттереççĕ. Занятисене Раççей Пенсионерсен союзĕн Çырчалли хулинчи уйрăмĕ йĕркелет, опытлă инструкторсем ĕçлеççĕ. Тренировкăсене августăн 29-мĕшĕччĕнех иртерме палăртнă. Каярах вара, сентябрĕн 6-мĕшĕнче, скандинави уттин вăрттăнлăхĕсемпе паллашнисем хулари «Прибрежный» паркра иртекен «Сывлăх – çăмăл утăпа» уçă фестивале хутшăнма пултарĕç.

ЭЛМЕТ хули усă курнă батарейкăсене пуçтарас республика акцине хутшăнать. Хулари гипермаркета кĕнĕ çĕре ятарлă контейнер лартса хунă. Кунта çынсем усă курнă батарейкăсене килсе пăрахма пултараççĕ. Сăмах май, Раççейре çулталăкне вăтамран 20 пин тонна батарейка сутаççĕ, утилизаци вара 1 процентран та сахалрах пуçтарăнать. Батарейкăн тытăмĕнче марганец (25 процент), цинк (24 процент), тимĕр (18,7 процент) тата графит (8,16 процент) пур. Ку ресурссемпе фармацевтикăра, хими производствинче, металлургире иккĕмĕш хут усă курма пулать. Çавăн пекех çĕнĕ батарейкăсем тунă çĕрте те. Усă курнă батарейкăсене тĕллевлĕн пуçтарни çутçанталăка вараласинчен те упранма пулăшĕччĕ.

ЕЛАБУГĂРА йăлана кĕнĕ Спас ярмаркки кăçал августăн 2-4-мĕшĕсенче пулать. Кăçал унта «Елабуга хулин ăстаçисен картишĕ» проекта пурнăça кĕртесшĕн. Елабуга музей-заповедникĕпе «Ырăлăх планети» коммерцилле мар организацин пĕрлехи проекчĕ «Культура» наци проекчĕпе парăнакан субсидие конкурсра çĕнтерсе илме тивĕçнĕ. Июлĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа августăн 4-мĕшĕччен Гассар урамĕнче Раççейĕн 14 регионĕнчен тата Украинăран пуçтарăннă ăстаçăсен картишĕ йĕркеленĕ кунта. 56 ăстаçă кунсерен мастер-классем иртерĕç. Кунта кĕленчерен тĕрлĕ савăт вĕрсе тума та, кавир тĕртме те, тăмран япаласем ăсталама та, чĕнтĕр тавраш, Оренбург тутăрĕ çыхма та, кăçатă пусма та, пир тĕртме те вĕренме май пулĕ.

çырăнтару – 2019

ПАРНЕСЕМ ХУÇИСЕНЕ КĔТЕÇÇĔ!

«Сувара» 2019 çулăн иккĕмĕш çур çулне çырăнса квитанцисене редакцие ярса парса акцие хутшăнакансем хаçатăн çак номерне чăтăмсăррăн кĕтеççĕ пулĕ. Ара, шăпах ку номерте хаçатăмăрăн парнисене кам тивĕçнине çырса кăларма шантарнăччĕ вĕт иртнĕ эрнере. Шантарнă-тăк, сăмаха тытатпăр. Тунтикун, июлĕн 22-мĕшĕнче, редакцире вулакансен квитанцийĕсемпе шăпа ярса парнесене палăртрăмăр (выляв самантне ӳкернĕ видеона пирĕн хаçатăн сайтĕнче тата социаллă сетьсенчи ушкăнĕсенче пăхма пулать).

Хальхинче «Сувар» парнисене çак вулаканăмăрсем тивĕçрĕç:

И.Трифонова *сăнӳкерчĕкĕ.*

Чăвашла кĕнекесем

1. **Мария Якимова** (Элкел районĕ, Хуракӳл) – Розин Ярандайăн «Кĕмĕл сулăллă сехет» кĕнеки;
2. **Ирина Мишкина** (Çарăмсан районĕ, Лагерка) – Розин Ярандайăн «Кĕмĕл сулăллă сехет» кĕнеки;
3. **Анна Никитина** (Чистай хули) – Розин Ярандайăн «Кĕмĕл сулăллă сехет» кĕнеки;
4. **Александра Цыфаркина** (Çĕпрел районĕ, Кĕçĕн Упи) – Василий Петровăн «Хăрушă йăнăш» кĕнеки;
5. **Анатолий Тимофеев** (Чăваш Ен, Елчĕк ялĕ) – Василий Петровăн «Хăрушă йăнăш» кĕнеки;
6. **Анна Никанорова** (Пăва хули) – Нелли Петровскаян «Тухатмăш» кĕнеки;
7. **Виктор Ермолаев** (Çĕпрел районĕ, Çĕнĕ Йĕлмел) – Нелли Петровскаян «Тухатмăш» кĕнеки;
8. **Зоя Аниськина** (Аксу районĕ, Сергеевский поселокĕ) – Сергей Павловăн «Тĕтре» кĕнеки;
9. **В.Долгова** (Çĕпрел районĕ, Çĕнĕ Çĕпрел) – Сергей Павловăн «Тĕтре» кĕнеки;
10. **Людмила Антипова** (Хусан хули) – Сергей Павловăн «Тĕтре» кĕнеки;
11. **Елчĕк библиотеки** (Чăваш Ен, Елчĕк ялĕ) – Валентина Тараватăн «Аякри сасă» кĕнеки;
12. **Юрий Никитин** (Аксу районĕ, Емелькино) – Римма Прокопьеван «Пĕртен-пĕр юр пĕрчи» кĕнеки;
13. **Галина Абросимова** (Аксу районĕ, Кивĕ Саврăш) – Римма Прокопьеван «Пĕртен-пĕр юр пĕрчи» кĕнеки;
14. **Юрий Адъютантов** (Çĕпрел районĕ, Çĕнĕ Упи) – Иван Яковлевăн «Аслă çул çине» кĕнеки;
15. **Анатолий Савгачев** (Нурлат районĕ, Ерепьел) – Иван Яковлевăн «Аслă çул çине» кĕнеки;
16. **Владимир Альмендеев** (Элмет районĕ, Анат Мактама) – Владимир Степановăн «Тенкри хĕçĕ» кĕнеки;
17. **Надежда Максимова** (Нурлат хули) – Улька Эльменĕн «Упраймарăм сана» кĕнеки;
18. **Зинаида Федорова** (Çĕпрел районĕ, Чăваш Шемĕршел) – Улька Эльменĕн «Упраймарăм сана» кĕнеки;
19. **Н.Петрова** (Чистай хули) – Айгиз Баймухаметовăн «Ан пăрах, анне!» кĕнеки;
20. **Нина Хуснутдинова** (Элмет районĕ, Вырăс Акташ) – Айгиз Баймухаметовăн «Ан пăрах, анне!» кĕнеки;
21. **Нина Сюртмина** (Çĕпрел районĕ, Аслă Аксу) – «Ак сана чап-чап уйăхĕ!» кĕнеке;
22. **Зоя Кузьмина** (Нурлат районĕ, Вăтам Хăмăшлă) – Николай Ларионовăн «Шураçка» кĕнеки;
23. **Степанида Нухратова** (Чистай районĕ, Анат Кăтрата) – Владислав Николаевăн «Хула хĕрачи» кĕнеки;
24. **Нина Савельева** (Хусан хули) – Елена Мустаеван «Уй варринче çинçе хăва» кĕнеки;
25. **Галина Мужикова** (Пăва районĕ, Пӳркел) – Николай Андреевăн «Шăрăх кунсем» кĕнеки.

«Сувар» логотипĕллĕ чей курки

1. **Алина Голубенко** (Хусан хули);
2. **Наталья Миронова** (Алексеевски районĕ, Чăваш Майни).

Алă сехечĕ

1. **П.Кириллова** (Хусан хули);
2. **Роза Самандеева** (Çĕпрел районĕ, Кĕçĕн Упи);
3. **Лариса Озерова** (Пăва районĕ, Элшел);
4. **Антонина Садовникова** (Çĕпрел районĕ, Матак).

Power bank

1. **Валентин Никифоров** (Ульяновск облаçĕ, Димитровград хули).

Смартфон

1. **Валентина Спиридонова** (Пăва районĕ, Пӳркел).

Çĕнтерӳçĕсене пурне те чунтан саламлатпăр! Парнесене июлĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа редакцие (Хусан хули, Декабристсен урамĕ, 2-мĕш çурт, 7-мĕш хут) килсе илмелле. Килсе илекенĕн çумра паспорт пулмалла.

Кам парнесене илме килеймест, редакцие шăнкăравласа тулли адресăра пĕлтерме ыйтатпăр, почтăпа ярса парăпăр.

Редакци.

ЧĂВАШ ЕНПЕ ТАЧĂ ÇЫХĂНУРА

Çулсерен июнĕн 20-мĕшĕнче аслă шкулсенче йышăну комиссийĕн ĕçĕ пуçланать. Ку вăхăта пулас студентсем ăста вĕренме кĕрессипе ыйтăва татса пама ĕлкĕреççĕ. Йышăну кампанийĕ чи малтан аслă шкулсемшĕн хĕрӳ тапхăр пулса тăрать. Кашни университет, институт, академи хăй патне вĕренме йыхравлать. Пултаруллă абитуриентсемшĕн вĕсен хушшинче конкуренци çивĕч пырать. Тĕрлĕ акци шутласа кăлараççĕ вара. Хусанти наципе тĕпчев технологи университечĕ, сăмахран, июлĕн 6-мĕшĕнче Аксура иртнĕ Уявра акци ирттерчĕ. Вĕсем мероприятин тĕп картишĕсенчен пĕринче хăйсен рекламăпа информаци стенчĕсене вырнаçтарнăччĕ. Университетран пысăк делегаци килнĕччĕ. Проект пуçаруçи ректор канашçи Николай Абруков иккен. Сăмах май вăл ЧНКА Ĕçтăвком Канашĕн пайташĕ те.

Массăлла мероприятие акци вырăнĕ пек суйлани, паллах, журналистсене тĕлĕнтерчĕ. Кун çинчен КНИТУ ректорĕ Сергей Юшко хăй каласа пачĕ.

– Халĕ пирĕн йышăну кампанийĕ пырать, паян кунта пирĕн тухса çӳрекен комисси ĕçлет. Вăл ытти хуласенче те пур. Çын нумай кунта, çав шутра вĕренме кĕрес шухăшлисем те пур, паллах. Кăмăл тăвакансем çакăнтах документсене пама пултараççĕ, Хусана килсе çӳремелле мар. Меллĕ вĕт, – каласа панăччĕ Сергей Владимирович.

Ректор пĕлтернĕ тăрăх, унччен вĕсен кун пек опыт пулман. Анчах çав кун нумай ача университетпа интересленнине шута илсен акци ăнăçлă иртнĕ. ППЭ парса 250 балл таранччен пуçтарнă çамрăксем те пынă вĕсем патне.

Университет пуçлăхĕн сăмахĕсемпе, кĕмелли балсен йышĕ факультета кура уйрăлса тăрать. Хăш-тăр çĕрте вĕсем пысăк, теприсенче сахалрах. Полимерпа инновации технологийĕсен факультетне вĕренме кĕме пуринчен те йывăртарах. Çулсерен бакалавриата 2100 çамрăка вĕренме илеççĕ, çавăн чухлех магистратурăна.

Каласа хăвармалла, университетăн колледжсем те пур. Унта 9-мĕш класс хыççăн вĕренме кĕме пулать. Ку енĕпе КНИТУ Раççейĕн чи лайăх 7 аслă шкулĕ шутне кĕрет.

Паллă ĕнтĕ, çулсерен бюджет ушкăнĕсем аслă шкулсенче чакса пыраççĕ. Коммерци ушкăнĕсем вĕсемпе танлаштарсан самай йышлăрах. Самани çапла кайрĕ.

– Мускаврисемпе танлаштарсан, пирĕн патра вĕренесси самай йӳнĕрех. Вĕрентӳ шайĕпе вара аптрамастпăр, – терĕ Сергей Юшко.

Калас пулать, университет вĕрентекенсен йышĕпе те палăрса тăрать. Федераллă стандартсен аккредитацине тивĕçлĕ иртеççĕ вĕсем.

Пире университет урăх енĕпе илĕртрĕ – Чăваш Енĕн пилĕк предприятийĕпе çыхăну тытнипе. Ректор палăртнă тăрăх, вĕсем пĕтĕм Раççейри предприятисемпе çыхăнса ĕçлеме тăрăшаççĕ. Мĕншĕн тесен аслă шкул Газпром, Росатом, Ростех валли шанчăклă наука никĕсĕ пулса тăрать. Оборона промышленноçĕпе, техмашпа та ĕçлеççĕ. Чăваш Ен предприятийĕсене илес пулсан, вĕсемпе тахçанах ĕçлĕ çыхăнусем йĕркеленĕ. Студентсем унта практика иртеççĕ. Ĕçлеме вырнаçакансем те йышлă.

– Ашшĕ-амăшне хăйсен ачи ăçта вĕренме каясси питĕ интереслентерет. Эпир паян кунта университетăн чĕрё портречĕ пулса тăратпăр. Çакна та палăртса хăварас килет: пирĕн патра вĕренсе тухнисем пĕри те ĕçсĕр юлмаççĕ. Çакна эпир çивĕч тимлесе тăратпăр. Нумай студент пĕр-пĕр предприятин тĕллевлĕ направленийĕпе вĕренет. Карьерăпа та çӳле улăхаççĕ вĕсем, – терĕ ректор.

Сергей Юшко калавнă тăрăх, оборона предприятийĕсенче ĕçлекенсем пурте тенĕ пек Хусанти технологи университетĕнчен вĕренсе тухнă.

Ирина ГОРДЕЕВА.

А.Наумов сăнӳкерчĕкĕ.

асаилÿ

ПĔРРЕМĔШ ТАТА ЮЛАШКИ ТĔЛПУЛУ

Чăвашран тухнă пĕрремĕш кинорежиссер тата сценарист – Д.Н.Михлеев Беларусра пурăннине тахçанах илтнĕччĕ-ха эпĕ, хаçат-журналта та ун çинчен вулакаланă. Вăл Çармăсан районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче çуралнине те пĕлетĕп. Ку яла вара хăçан-тăр пирĕн ялтан – Тутарстанри Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмелĕнчен – тухса кайнă çынсем никĕслени паллă. Нумай илтнĕ пулин те халиччен чăвашсен паллă çыннине курма тÿр килменччĕ. 2018 çулхи сентябрь уйăхĕнче вара хăй чĕннипе ун патне ятарласа калаçмашкăн, пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен ыйтса пĕлмешкĕн Минска тухса кайрăм. Анчах кĕтнĕ тĕлпулу пĕртте савăнăçлă пулмарĕ.



Тĕп редактор сĕннипе

Йĕркипех тытăнар-ха ку историе.

2018 çулхи январь уйăхĕнче Шупашкарти Пичет çуртĕнче мана Чăваш кĕнеке издательствин тĕп редакторĕ В.Н.Алексеев тĕл пулчĕ. Чăваш Республикин тĕп хулине эпĕ Пичет кунне уявлама кайнăччĕ.

– Итле-ха, эс машинăпа килнĕ-и? Ман Ульяновска парса ямалли кĕнеке пачкисем пур. Илсе кайса пар-ха, тархасшăн, çула май çавсене. Вĕсем Дмитрий Михлеевăн 2014 çулта тухнă кĕнекисем – «Ось земли», кинорежиссер çинчен çырнă «Самант» журнал номерĕсем те пур унта. Дмитрий Никонорович аппăшĕ – Елена Никоноровна Сидулина Ульяновскра пурăнать. Ку кĕнекесене çавна кĕртсе памалла пулать, – терĕ вăл.

Вăт ку хыпар! Паллă ентешĕмĕрĕн аппăшĕ хамăр хуларах пурăнать иккен! Эпир вара çакна илтмен те. Хам вара ун чух «Канаш» хаçат редакторĕнче ĕçлетĕп, çак япалана пĕлменнишĕн кăштах намăслантăм та.

– Дмитрий Никонорович питĕ ырă та пултарулă çын. Эпир унпа тахçантанпа çыру çÿрететпĕр. Эс те ун патне электронлă почта урлă çырма пултаратăн. Эп сана ун адресне интернет урлă çырса ярăп кайран. Вăл интереслĕ шăпаллă çын, кăмăлу пулсан Минска командировкăна кайса килме те пултаратăн. Каяс пулсан ун пирки эпĕ ăна каласа хуратăп. Вăл сана ăшшăн кĕтсе илĕ, хăй çинчен каласа парĕ, унти чăвашсемпе паллаштарĕ, – малалла калаçать Валерий Николаевич.

Çапла эпĕ Дмитрий Михлеевăн вырăсла тухнă «Ось земли» кĕнекине Ульяновска илсе килтĕм, Орджоникидзе урамĕнче пурăнакан Эрнюк аппа (ун чăн ячĕ çапла) патне кĕртсе патăм. Вăл 1938 çулхи, 13 çул ытла ĕнтĕ шалкăм çапнă мăшăрне, Кузьма Митрофановича, çар çынни пулнăскере (подполковник), пăхса-тирпейлесе пурăнать. Эпĕ ун чухне Сидулинсем патне васкаварлă кăна кĕрсе тухрăм, кĕнекесене çеç хăвартăм. Тепрехинче вара вĕсен хваттерне ятарласа кайрăм, Сидулинсем çинчен статья çырма материал хатĕрлерĕм. Статья малтан «Канаш» хаçатра, каярах «Суварта» пичетленсе тухрĕ. Эп каллех кăштах маларах кайрăм-ха, каялла таврăнар.

Çыру

Шупашкартан килнĕ хыççăн темиçе кунран мана чăнах та В.Н.Алексеев чăваш кинорежиссерĕн электронлă адресне çырса пĕлтерчĕ. Эпĕ вара хăюлăх çитерсе Минска Д.Н.Михлеев патне çыру çыртăм, хампа паллаштартăм, хăш ялта çуралнине пĕлтертĕм, унăн кĕнекисене Шупашкартан илсе килсе аппăшĕ патне кĕртсе панине хыпарларăм. Хам кăштах иккĕлентĕм те: те хуравлĕ ĕнтĕ е хуравламĕ те-и?

Анчах вăл нумай кĕттермерĕ, 2-3 кунранах çыру килчĕ. Унăн содержанийĕ вара мана тĕлĕнтерсех пăрахрĕ: мĕнле сăмахсемпе тата мĕнле хавхаланупа çырать ман пата – пĕр палламан çын патне – паллă кинорежиссер!

Пĕчĕк Митя 4 çултах вулама вĕреннĕ, каярах ÿкерме те пуçланă, художник пулас ĕмĕтпе пурăннă. Шкулта пĕр парта хушшинче вăл хальхи литературăра палăрнă Чăваш халăх поэчĕпе Порфирий Васильевич Афанасьевпа ларнă. Çапла вара, пĕр парта хушшинчен чăваш тĕнчине икĕ паллă çын тухнă.

«Дорогой Земляк! Скажу Вам – мне улыбнулась Судьба. Всю жизнь мечтал побывать в Вашем Новом Ильмове, откуда наши предки. Побывать не пришлось, а вот с Вами познакомиться Господь сподобил. Надеюсь, со временем Вы мне откроете много интересного о наших Ильмовах. Есть ли там же и Старое Ильмово? Какая река там протекает? Не Сульча ли? А пока – огромное спасибо за книги. Я грешным делом подумал, хорошо бы Вам сделать командировку в Минск. Остановитесь у меня. Сделаете большой материал про наш город-герой, про общину белорусских чувашей «АТĂЛ». Мы Вас встретим как дорогого гостя. Покажем Вам наши Святыни – Хатынь, Курган Славы и другие объекты. Сам я теперь в связи с серьезной болезнью далеко (на малую родину) выезжать уже не могу. Так что – надеюсь и жду. Это может быть весной или летом, машина у нас есть. Такое мое предложение.

Дмитрий Михлеев, Минск.
26 января 2018 г.»

Мана вăл çакăнтах хăйĕн тата мăшăрĕн телефон номерĕсене те çырса ячĕ. Эпĕ вара ăна часах хамăр ял çинчен çырнă статьяна ярса пама шантартăм.

Михлеевăн иккĕмĕш çырăвне те пĕтĕмпех илсе кăтартас килет:

«Салам, Николай Николаевич. Буду ждать от Вас статью. Я грешным делом кумекал, что мои предки добрались от вас, убегая от насильственной христианизации, по реке Сульча до его истока – он находится в 4-х км от моего села – по Большому Черемшану от Ульяновска и вверх, потом по Сульче до истока. Мои предки так и не приняли Христа, и у нас остались замечательные обряды, уявы. В моем детстве все это праздновалось, соблюдалось. Уявы восхищали и песнями, и хореографией. На них приходили любоваться молодежь из татарской Лашманки и жители Старого Ильмова. И имена тĕп чувашские у нас остались. Моя фамилия идет от языческого чувашского имени Михелей. Маму звали Эрнюсь Тухтамановна, она из некрещеных чувашей. С приездом в гости – ждем. Если самолетом – встретим в аэропорту. Если поездом – на вокзале. Составим программу пребывания. Об обрядах я написал в повести «Круговорот» в книге «Ось земли». Вы попросите у сестры книгу – как подарок от автора и полистайте. Пишите, Ваш – Дмитрий Никонорович.

29 января 2018 г.»

Малашнехи çырусенче эпĕ унăн тăван ялĕнче пулса курнине пĕлтертĕм, хам ял çинчен çырнă пысăк статьяна ярса патăм. Çулла вара Нурлата Уява кайса килни çинчен те хыпарларăм. Питĕ тунсăхлă çырчĕ вăл ун хыççăн. Нурлат – ман станци, яла кайнă чух эпĕ çавăнта анса юлаттăмччĕ, киле кайнă чух вара çул тăршшĕпе ачалăха аса илеттĕмччĕ текен сăмахсем пур унта.

Кам вăл Михлеев?

Кунта вулакансене, уйрăмах çамрăксене, Д.Н.Михлеевăн кун-çулĕпе паллаштарни те вырăнлă пулĕ. Унăн пурнăçне аса илер-ха кăштах. Вăл 1942 çулхи январĕн 18-мĕшĕнче çуралнă, çемьери вунă ачаран – чи кĕçĕнни. Ашшĕ, чиркÿ прихут шкулĕнче кăна вĕреннĕскер, виçĕ вăрçа хутшăннăскер, ир вилнĕ. Амăшĕ вара 97 çул пурăннă.

Пĕчĕк Митя 4 çултах вулама вĕреннĕ, каярах ÿкерме те пуçланă, художник пулас ĕмĕтпе пурăннă. Шкулта пĕр парта хушшинче вăл хальхи литературăра палăрнă Чăваш халăх поэчĕпе Порфирий Васильевич Афанасьевпа ларнă. Çапла вара, пĕр парта хушшинчен чăваш тĕнчине икĕ паллă çын тухнă.

Ÿссе пынă май Дмитрий ялти ĕçсене хăнăхнă, кĕтÿ кĕтнĕ, утă турттарнă, трактористра вăй хунă... Шкул хыççăн Донецка тухса кайса сăрт-ту училищине пĕтернĕ, шахтăра электровоз çÿретнĕ. Унтан Хусанти ÿнер училищине вĕренме кĕнĕ, çав вăхăтрах музыка инструменчĕсем кăларакан фабрикăра вăй хунă, купăссем ăсталанă. Салтакран таврăнсан пушарникра ĕçленĕ, Хусан университетне вĕренме кĕнĕ, çав вăхăтрах «Советская Татария», «Комсомолец Татарии» хаçатсене тăтăш статьясем çырса тăнă. Каярах Мускаври графикăпа живопись университетĕнчи искусствăсен факультетĕнче куçăн мар вĕреннĕ.

1967 çулта вара Дмитрий Михлеев Пĕтĕм Союзри кинематографи институтĕн студенчĕ пулса тăрать (кунта кĕме конкурс питĕ пысăк пулнă – пĕр вырăна 150 çын). Çав вăхăтрах кочегарта вăй хунă – пурăнма укçа кирлĕ-çке. Ку институтра пĕр факультетрах ун чухне хальхи паллă кинорежиссер Сергей Михалков та вĕреннĕ.

Д.Н.Михлеевăн диплом ĕçĕ валли ÿкернĕ кĕске метражлă «Икс кайăк» фильмĕ институтри тата Пĕтĕм тĕнчери «Ылтăн дельфин» кинофестивальсенче тĕп парнене тивĕçнĕ, Пĕтĕм тĕнчери кĕске метражлă фильмсен 19-мĕш кинофестивалĕн дипломне çĕнсе илнĕ. Унсăр пуçне ытти кинофестивальсен дипломанчĕ те пулса тăнă.

Дмитрий Никонорович институт пĕтерсен 1972 – 2001 çулсенче «Беларусьфильм» киностудире вăй хунă, пурĕ 30 ытла документлă тата илемлĕ фильм ÿкернĕ. Вĕсем тĕрлĕ наградăсене тивĕçнĕ. Д.Н.Михлеев – СССР Кинематографистсен союзĕн (1974) тата Беларусь Писательсен союзĕн пайташĕ (2007). Виçĕ кĕнеке авторĕ – «Поле перейденное» (Шупашкар, 1985), «Круговорот» (Минск, 1988), «Ось земли» (Шупашкар, 2014). Вăл Беларусь чăвашĕсен пĕрлĕхĕн ĕçне хастар хутшăннă, вĕсем пирки 2000 çулта «Аптраман йăхĕнчен» ятлă документлă фильм ÿкернĕ. «Нарспи» кинофильм ÿкерес шухăшпа та хавхаланса пурăннă вăл пĕр вăхăт, анчах ăна укçа-тенкĕпе пулăшма шантаракансем пулман. Çÿлерех çырнисем пурте пĕлекен фактсем ĕнтĕ, вĕсем тĕрлĕ çăлкуçсенче пур.

(Малалли пулать.)

Николай ЛАРИОНОВ-ЙĔЛМЕЛ.
Чĕмпĕр хули.

Михлеевсен çемье архивĕнчи сăнÿкерчĕкре: Д.Михлеев салтакра чух.

пултаруллисем

ЮРЛАМА ТА ĂСТА, СĂВĂСЕМ ТЕ ÇЫРАТЬ

Хусанти А.Туполев ячĕллĕ техника университетĕнчи Компьютер технологийĕсемпе информаци хўтлĕхĕн институчĕн автоматизациленĕ проектировани системисен кафедрин вĕренӳ лабораторийĕн заведующийĕ В.Г.Савруков ыран, июлĕн 27-мĕшĕнче, 72 çул тултарать.

Виталий Георгиевич Аксу районĕнчи Кĕçĕн Сĕнчел ялĕнче çуралса ўснĕ. Ачаранах ĕçе çыпăçнă. Ашшĕ Георгий Антипович комбайнер пулнăран, унпа пĕрле тырă пухса кĕртес ĕçе хастар хутшăннă. Аслă классенче вĕреннĕ чух хайех комбайн рулĕ умне ларнă вăл.

Мамăкра вăтам шкул пĕтерсен Хусанти авиаци институтне вĕренме кĕнĕ. Алла диплом илсен çак аслă шкултах ĕçлеме юлнă: аслă лаборантра, аслă механикре, инженерта тăрăшнă. 1979 çулта Виталий Георгиевича электрошутлав аппаратурине конструкцилессипе кăларассин кафедрин вĕренӳ лабораторийĕн заведующине çирĕплетнĕ. Хĕрĕх çул тăрăшать вăл кунта. Обществăлла ĕçе те хастар хутшăннă яланах. Чылай вăхăт профсоюз организацийĕн председателĕ, граждансене хўтĕлекен штаб пуçлăхĕ, пушарпа техника комиссийĕн явапллă пайташĕ пулса тăрăшнă. Институтра нумай çул пĕр вырăнта ăнăçлă ĕçлесе палăрнăшăн ăна ĕçтешĕсем хисеплеççĕ. Çĕршыв, республика шайĕнчи нумай хисеплĕ ята, тав хутне тивĕçнĕ вăл.

Мăшăрĕпе Галинăпа виçĕ ача çуратса ўстернĕ. Ачисем хăйсем пекех аслă пĕлӳ илнĕ, пурнăçра хăйсен вырăнне тупнă. Савруковсен ултă мăнук халĕ.

Виталий Георгиевич сăвăсем те çырать. Унăн «Я твоим сердцем отличен» автобиографиллĕ сăвăсен пуххи пичетленсе тухнă. Хитре сасăллăскер, юрлама та ăста. Кĕскен каласан, ентешĕмĕрĕн пултарулăхĕ тĕрлĕ енлĕ: Виталий Георгиевич хăйĕн йăх-тымарĕн историйĕпе те интересленет, ăру историне малалла çырать. Çав вăхăтрах спортпа та туслă. Кашни кун 3-4 километр çуран утать, хĕлле йĕлтĕрпе чупать.

Менелник ячĕпе Виталий Георгиевича ăшшăн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, иксĕлми хавхалану сунатпăр.

Людмила САВРУКОВА-АНТИПОВА.
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

йăла-йĕрке

ПАТРАКЛĂСЕН ЯЧĔСЕМ ТЕ ЧĂВАШЛА

Элмет районĕнчи Патраклă ялĕ (вырăсла – Старое Суркино, ĕлĕкхи хăш-пĕр документсенче Суркино Батрак тенĕ, «Патраклă» сăмаха вырăсла Батрак тенĕ) 1670 –1680 çулсенче пуçланса кайнă. Ватăсем каласа панă тăрăх, Сĕрке ятлă çын кунта хăйĕн кил-йышĕпе куçса килнĕ: тăхăр ывăл тата пĕр хĕр – Матрўне – пулнă унăн. Çавсем ял пуçласа янă. Вĕсем кунта тĕне кĕртесрен тарса килнĕ. Чăваш пулса юлас, чăваш тĕнĕпе пурăнас тесе.

Патраклă Кама леш енче, Пĕкĕлмепе Пелепей сăрчĕ (Бугульминско-Белебеевская возвышенность) çинче, Кăвак çырмин (река Кувак) бассейнĕнче, Элмет хулинчен çирĕм сакăр километр кăнтăр-хĕвеланăç еннелле вырнаçнă. Кунти чăвашсем Учӳк ирттерни пирки пĕрре мар илтнĕ, вуланă, анчах та халиччен кайса курманччĕ. Учӳк (уй чӳкĕ – «полевое моление») – чăвашсен ĕлĕкрен пыракан йăли-йĕрки. Ăна тырпул ăнса пултăр тесе ирттереççĕ. Çўлти Турăран – патраклăсем ăна Тур-папай теççĕ – çитес çулччēнхи тырпулччен пурăнма, кив тырăпа çĕнĕ тырра сыпăнтарма, тырпул çитĕнтерме пар тесе кĕлтуса чўклесе ыйтаççĕ. Авалтан килекен йăла-йĕркене кунти чăвашсем çирĕп тытса пыраççĕ: хисеплĕ ватăсенчен ăша хывса вĕренсе пырса хăйсенчен çамрăккисене вĕрентсе пыраççĕ. Çак йăла-йĕркене тытса пыма, фестивале йĕркелеме çак ял хутлăхĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ, нумай çул Элмет районĕнчи Чăваш наципе культура центрне ертсе пыракан Инна Ивановна Альмукова-Лисина питĕ тăрăшать, нумай вăй хурать. Вăл хăйĕн районĕнчи чăвашлăха, чăваш пурăнакан хуçалăха лайăх енĕпе кăна кăтартса мала тухса 2007 çулта Пĕтĕм Раççейри «Лучший муниципальный служащий» конкурсăн лауреачĕ пулнă – Германие те çитнĕ, Целле хулинче Менеджмент академийĕнче пĕлӳ пухнă.

Кăçал июнĕн 29-мĕшĕнче Кама леш енчи чăвашсен XIII «Учӳк» уçă фестивальне эпĕ те кайса куртăм. Сăмах май, пĕрремĕш хут эпĕ патраклăсене 2008 çулта Нурлатри Уявра курнăччĕ, сăн ӳкернĕччĕ, ячĕсене те çырса илнĕччĕ, тĕлĕннĕччĕ: ăçтан-ха капла чăваш ячĕсемпех пурăнаççĕ тесе. Унтанпа 11 çул иртсе кайрĕ. Халь тин вĕсем патне кайса куртăм.

Е.Федотова Унеслу Сидуловна Сатыбалова патĕнче.

Учӳк пуçламăшне курма ирхине ултă сехетех çитмеллеччĕ. Ялăн хĕвелтухăç енче, сăрт çинче, пысăк йывăç патĕнче ун вырăнĕ. Çав пысăк йывăç çумне иртнĕ çулсенче Учӳкра пуснă вăкăр пуçне çыхса хунă: шап-шурă пуç шăмми çакăнса тăрать ĕлĕкхи пурнăçа кăтартакан картина çинчи пек. Пĕр туратти çинче ури шăммисем çыхса хунипех тăраççĕ. Эпир çитнĕ çĕре кунта учӳк пăтти пĕçерме вун икĕ хуран хатĕрлесе хунăччĕ ĕнтĕ. Кăшт аяккарах кăкарса хунă ула вăкăр тăратчĕ. Ăна чӳк тума илсе килнĕ кунта, халăхран укçа пухса илнĕ ăна, 54 пин тăракан вăкăра. Кĕлтуса, шыв сапса силлентерсе пусрĕç ăна. Çав ашпа пăтă пĕçерчĕç вун икĕ хуран. Пухăннă пĕтĕм халăха çитерчĕç пăттине. Эпир те çирĕмĕр. Питĕ тутлăччĕ. Выльăх (вăкăр) пусакансем те, пăтă пĕçерекенсем те, кĕл тăвакансем те пурте чăвашла тумланнă. Пурте чăвашсем. Ялĕпех чăвашла калаçаççĕ.

Кăçал кĕлтăваканни ялти хисеплĕ çын, вĕрентекен (учитель) пулса ĕçленĕ – Галина Тимирбаевна (Тимофеевна) Бикбова (1947 çулхи) – пулчĕ. «Тур-папай чунран ыйтса каласа кĕл тунине юратать. Чунран ыйтса каласа кĕлтумалла», – терĕ мĕн каласа кĕлтунă пирки Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн тĕпчевçи, истори наукисен кандидачĕ, этнограф Георгий Борисович Матвеев ыйтсан. Унччен маларах ялти чи ватă çынсенчен пĕри – тăхăр вун пилĕк çулти Унеслу акка – Унеслу Сидуловна Сатыбалова (Шангареева) (1924 çулхи) – кĕл тунă. Унеслу акка чипер-сывă, кăçал çўремерĕм терĕ. Эпĕ ун патне ыран Учӳк тенĕ чух кайса килтĕм мĕн килчĕ вăл ыйтса пĕлме. Унеслу аккан амăшĕ Чияслу ятлă пулнă, Чияслу Чердыковна (хут çинче Чиаслу Уттаховна) Утнюхина, ашшĕ – Сидул Питтулович (хут çинче – Сидулла Пидуллович) Тимофеев. Тепĕр кунне, Учӳк хыççăн, Вартюк Степановна Корюшова (1925 çулхи), Кспикке (Кăспикке) Степановна Елинова (1934 çулхи), Эльбикке Измайловна Лисина (Альмукова) (1934 çулхи) патĕнче пултăм. Вĕсем мана ĕлĕкхи пурнăç çинчен каласа пачĕç. Чухларăр пулĕ: вĕсен ячĕсем, ашшĕ ячĕсем, хушамачĕсем – чăвашла. Итлеме, çырма, вулама кăмăллă. Ытти çĕрте ун пеккисем çук ĕнтĕ... Патраклăра кăна юлнă. Хăçан, кам çавсене ыйтса пĕлсе, пĕр çĕре пухса çырĕ-ши? Ăслăлăх валли пуян материал пулĕччĕ.

Питĕ маттур чăвашсем пурăнаççĕ Патраклăра. Ахальтен мар унта Шупашкартан хăшĕ-пĕри пурăнмаллах куçса каясшăн. Патраклăсем чăвашсен ытти йăли-йĕркисене кăтартса пачĕç. Сăмахран, уяв иртерни, кĕр сăри, салтака ăсатни тата ытти те: тумĕсене тумланса, сăмахĕсене каласа, юррисене юрласа, апат-çимĕçне хатĕрлесе. Çак фестивальте Тутарстанри чăвашсем, патраклăсем пĕрре те ахаль тăманни усççăнах курăнчĕ. Пурте çак фестивале хатĕрленнĕ, пурĕ икĕ пин ытла çын пухăннăччĕ.

Патраклăсен Учӳк иртерес чапĕ Мускава та çитнĕ. Мускавран ют çĕршыв журналĕ валли ĕçлекен корреспондентсем килнĕччĕ. Вĕсем пĕтĕмпе ӳкерсе çўрерĕç, ялти масар çине те кайса ӳкерсе килме ĕлкĕрнĕ. Сăмах май каласан, Патраклă ялĕн тăватă масар: Чăваш масарĕ, Тутар масарĕ, Вырăс масарĕ, çар çыннисен (вăрçăсенче, салтакра вилнисен) масарĕ (унта хăйсем пурте пулмасан та ячĕ, уйăрнă вырăнĕ пур: вĕсене асра тытаççĕ – çав паха). Патраклăсем хăйсен паттăр несĕлĕсене асра тытса, сума суса пурăнаççĕ, ĕмĕртен килекен йăла-йĕркене манмаççĕ.

Елена ФЕДОТОВА,
филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ,
Чăваш патшалăх гуманитари
ăслăлăхĕсен институчĕ.
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

чăваш енри елчĕк тăрăхĕнче

ХУЛА ЎНЕРÇИ ЯЛА СĂНАРЛАТЬ...

«Окружающая нас Природа такова, что перед ней напрочь забываешь о существующей в живописи иерархии жанров, делении на главные и второстепенные. Все в гармонии!» Çак йĕркесен авторĕ – Елчĕкре çуралса ўснĕ Виктор Карамаликов.

Ачалăхри тĕрлĕ шухăшĕмĕт ăна çĕнĕ тўпене – ўнере илсе тухнă: çар тивĕçне пурнăçланă хыççăн И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн ўнерпе графика факультетĕнче (1991) пĕлў илнĕ. Малалла кун-çулне Тольяттири автомобильсем кăларакан заводра çыхăнтарнă – инженер-художникен туслă командинче вăй хурать. Паян вăл – ВАЗ ветеранĕ.

Хула пурнăçĕ ăна тĕппипех хăй енне çавăрса илнĕ пулин те, чунĕнче, шалта, ял юнĕ вылять. Йывăç-кураксемлĕ, çырма-çатрасемлĕ, пĕве-кўлĕсемлĕ çутçанталăк сăнĕсем художникăн асамлă алли витĕр черетлĕн шăранса тухаççĕ. 2014 çулта ўнерçĕ хăйĕн пултарулăхне пуçласа Пĕтĕм халăхсен хушшинчи

«Раççейри Искусство эрни» (Мускав) сăрă ĕçĕсен конкурсĕнче тĕрĕсленĕ, пейзажистсенчен «Вятка» картинипе çĕнтерўçĕ пулса тăнă. «На просторе» ĕçĕ – 2-мĕш вырăнта. Çав çулхинех вăл Берлинта иртнĕ «Раççей литературин ылтăн ĕмĕрĕ» Пĕтĕм тĕнчери курав проектне ўкерчĕксем тăратать. Вĕсенчен хăшне-пĕрне хальхи художниксен каталогне кĕртеççĕ.

2017 çулта Раççей шайĕнчи конкурсра «После дождя. Болото» ĕçĕпе «Классика живописçĕ» номинацире ыттисене хыçала хăварать. Кăçалхи «Возвращение с молебна» ĕçĕпе (ўкерчĕкре) Раççей Искусство Премийĕн I степеньлĕ лауреачĕ пулса тăрать.

Виктор Львович 2010 çултанпа – Раççей ўнерçисен пĕрлĕхĕн пайташĕ.

В.Карамаликов. «Кĕлĕрен таврăнни» картина.

Николай МАЛЫШКИН.
Автор сăнўкерчĕкĕ.

«ПĔРЛĔХПЕ ТĂВАНЛĂХШĂН ЧИКĔ ÇУК»

Леонард ЛЕВЫЙ,
Елчĕк район администраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ:

Пирĕн тăрăхри ялсенчен чылайăшĕ ĕлĕк Пăва уесне кĕнĕ. Кирек мĕнле ĕç тумалла пулсан та пĕр-пĕрин патне кайнă. Хăш-пĕр ялсенчи тăванлашнă тутарсемпе чăвашсем вара час-часах хăнана çўренĕ. Анчах иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнчи тĕплĕн шутласа туман хăш-пĕр улшăнусене пула çав туслăх кăштах сĕвĕрĕлме пуçланăччĕ. Çапах та пурнăç ырă йăла-йĕркене çĕнĕрен çирĕплетме хистет. Халĕ тутарсемпе чăвашсен туслăхĕ çĕнĕ пусăма çĕкленет. Кўршĕллĕ Пăва, Теччĕ тата юнашарах вырнаçнă Камско-Устьински районĕсемпе уйрăмах килĕштерсе пурăнатпăр.

Астăватăп-ха, вун пилĕк-çирĕм çул каялла Пăвапа Елчĕк хушшинчи çулпа çўреме те хăрушăччĕ. Питĕ хăвatлă тесе шутланнă «УАЗсем» путса ларни те пулнă. Ун чухнехи икĕ район ертўлĕхĕ пĕрле каласса татăлчĕç те çав вăтăр ытла километрлă çула икĕ çул хушшинчех асфальт сарса хытарчĕç. Çакă кўршĕллĕ районсемпе хуласен экономикине аталантарас ĕçре те, тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан халăхсен туслăхне çирĕплетме те, пĕр-пĕрин чĕлхипе культурине çывăхлатма-аталантарма та анлă майсем уçса парать. Акă, нумаях пулмасть пирĕн ял хуçалăх предприятийĕсен ертўçисемпе специалистсем сысна ĕрчетекен «Авангард» комплексра пулчĕç. Унта Елчĕк енрен пынă рабочисем те пурри тĕлпулăва татах та пысăк витĕм кўчĕ. Халех ĕнтĕ пирĕн фермăсенче кўршĕсен паха опычĕ ĕçе кĕрсе пырать. Юнашарти фермерсемпе тĕрлĕ формăллă хуçалăхсем тўрĕ çыхăнусем тытни те усăллă. Елчĕк пасарĕнче Тутарстанри фермерсен аш-какай тата сĕт продукчĕсене чăвашсем хапăлласах туяннине курма пулать.

Ырă туслăх вăйланнă май, культурăпа вĕрентў, спорт енĕпе те çитĕнўсем палăраççĕ. Вăрăмхăвари хăш-пĕр çамрăксем Пăва районне кĕрекен Лащăпуçĕнчи шкулта пĕлў илеççĕ. Унта икĕ-виçĕ çул каялла Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай çĕр çул тултарнине анлăн паллă турĕç. Ялсенчи илемлĕ пултарулăх коллективĕсем пĕр-пĕрин патĕнче концертсем кăтартасси йăлана кĕрет. Иртнĕ çулсенче хăйĕн ташши-юррипе Чăваш Енре çеç мар палăрнă Ульяна Патшина çамрăк артистка Хусанти конкурса хутшăнса хăйĕн пултарулăхĕпе палăрчĕ.

Чăвашсемпе тутарсем спорт ăмăртăвĕсенче те пĕрле тупăшаççĕ. Эпир хамăр районти çамрăк футболистсен команди «Сувар» хаçат ирттерекен ăмăртусене хутшăнса паха кăтартусем тунипе кăмăллă.

Кўршĕсемпе лайăх çыхăнура пулниех пире экономикăпа культурăра паха кăтартусем тума хавхалантарать. Елчĕк ен – ял хуçалăх аталанăвĕ енĕпе те, культурăпа спортра та республикăра малтисен йышĕнче. Çывăх вăхăтра, пăвасен тĕслĕхĕпе, Елчĕкре ачасем валли кануpa спорт комплексĕ тăвассине вĕçлетпĕр. Унта велосипедпа çўремелли тата çуран утмалли-чупмалли ковролин сарнă çулсем хывнă, тĕрлĕ вăйă площадкисем, ĕлĕкхи ял пурнăçне кăтартакан палăк-сăнарсем вырнаçтарнă та ĕнтĕ.

Анатолий ТИМОФЕЕВ.
Автор сăнўкерчĕкĕ.

кун хыççăн кун

Июль, 27

Хĕвел: тухать – 3.39, анать – 20.00, кун тăршшĕ – 16.21. Уйăх: тухать – 23.54, анать – 15.19.

Раççейре суту-илў ĕçченĕсен кунĕ.

Уйăх календарĕпе – *25-мĕш кун*. Лару-тăру хăвăрт ĕçлеме памасть.

Июль, 28

Хĕвел: тухать – 3.41, анать – 19.59, кун тăршшĕ – 16.18. Уйăх: анать – 16.35.

Раççей Тинĕс-çар флочĕн кунĕ.

PR-специалист кунĕ.

Пĕтĕм тĕнчери гепатитпа кĕрешмелли кун.

Уйăх календарĕпе – *26-мĕш кун*. Васкамалла мар, шухăшламасăр çынна вăрçма тăхтамалла. Кăмăла канăç кўрекен ĕçпе аппалансан аванрах пулĕ.

Çак кун çуралнă: *Наталья Белохвостикова (1951)*.

Июль, 29

Хĕвел: тухать – 3.42, анать – 19.57, кун тăршшĕ – 16.15. Уйăх: тухать – 0.28, анать – 17.49.

Халăхсен хушшинчи тигр кунĕ.

Уйăх календарĕпе – *27-мĕш кун*. Ĕçре те, шухăшсенче те сапаланмалла мар.

Çак кун çуралнă: *Игорь Крутой (1954)*.

Июль, 30

Хĕвел: тухать – 3.44, анать – 19.55, кун тăршшĕ – 16.11. Уйăх: тухать – 1.15, анать – 18.52.

Халăхсен хушшинчи туслăх кунĕ.

Пĕтĕм тĕнчери çынсемпе суту-илў тăвассипе кĕрешмелли кун.

Уйăх календарĕпе – *28-мĕш кун*. Пуçланă ĕçсене малалла тăсмалла, пур çĕрте те йĕрке тумалла.

Çак кун çуралнă: *Арнольд Шварценеггер (1947), Ирина Винер-Усманова (1948)*.

Июль, 31

Хĕвел: тухать – 3.46, анать – 19.53, кун тăршшĕ – 16.07. Уйăх: тухать – 2.18, анать – 19.43.

Уйăх календарĕпе – *29-мĕш кун*. Лару-тăру кирлĕ мар çĕртен стресс «парнелеме» пултарать.

Çак кун çуралнă: *Эдита Пьеха (1937), Леонид Якубович (1945)*.

Август, 1

Хĕвел: тухать – 3.48, анать – 19.51, кун тăршшĕ – 16.03. Çĕнĕ уйăх (6 сехет те 11 минутран): тухать – 3.36, анать – 20.20.

Пĕрремĕш тĕнче вăрçинче (1914 – 1918) пуç хунисене асăнмалли кун.

Пĕтĕм Раççейри инкассатор кунĕ.

Раççей Хĕç-пăшаллă Вăйĕсен Тылĕн кунĕ.

Уйăх календарĕпе – *30/1-мĕш кун*. Тахçанхи плансене пурнăçа кĕртме шăпах аван вăхăт халь.

Август, 2

Хĕвел: тухать – 3.50, анать – 19.49, кун тăршшĕ – 15.59. Уйăх: тухать – 5.03, анать – 20.48.

Раççей Сывлăш-десант çарĕсен кунĕ.

Уйăх календарĕпе – *2-мĕш кун*. Мероприятисем планланă чух темиçе вариант пăхса тухма ан ўркенĕр.

(Вĕçĕ. Пуçл. 26-28№№.)

Унăн Турă панă кунĕ
Йăлт иртет кил-тĕрĕшре.
Йăпанать кунта ун чунĕ
Пурпĕр вак-тĕвек ĕçре.

Сачĕ пур кăшт йăпанмалăх –
Çитĕнет улма-çырла.
Хăйĕн те ун ылтăн алă:
Помидор, хăяр хупать.

Хурлăхан, хăмла çырлийĕ,
Слива, ежевика пур.
Тутлăскер вĕсен куклийĕ:
«Тусăм, тутанса, – тет, – кур».

Ӳстерет сухан та кишĕр,
Çĕрулми те пахчара.
Çакăнпа, тăванăм, килĕш:
Ĕçлени мĕне чарать?

Ак, кăçал та çĕрнĕ тислĕк
Кĕртрĕ мар-и пахчине?
Çак кашниншĕн ырă тĕслĕх,
Çĕрулми лартаканнех.

Çавăнпах та пысăк тухăç
Çулсерен пахчи парать.
Йăлкăшса çуталнă тухăç
– Тĕрĕс, – тет çак хыпара.

Кунсерен, хăш питĕ кирлĕ,
Шăнкравлать ыр тантăшне.
Шӳтлешет: «Тен, эсĕ чирлĕ?» –
Кулнă май тытса ăшне.

Тантăшсем вуç ватăлмаççĕ –
Кутăн мар-ха пурнăçра.

Николай ДВОРОВ-ШЕМЕКСЕМ

ТАНТĂШСЕМ

Сăвăлла очерк

Пур ĕçе те хутшăнаççĕ –
Уншăн мухтама пурах.

Иккĕш те ертсе пыраççĕ
Халь ветерансен йышне.
Кирлĕ пулăшу параççĕ
Хăвармасăр нихăшне.

7

Мăккăлĕ – Тӳскел чăвашĕ,
Пурăнать мăшăрĕпех.
Тулнă выльăхпа картишĕ
Чăн та фермерăнни пек.

Пур ĕни, хур-кăвакалĕ,
Сыснисем, чăххи-чĕппи.
Кун пирки çын ак мĕн калĕ:
«Ку, чăнах, Тур панă пил».

Тăрăшаççĕ, ӳркенмеççĕ –
Уншăн пур-ха вĕсен хал,
Пурнăçа ӳпкелемеççĕ –
Кун пек хастарсем сахал.

Яшлăхра тата хитреччĕ
Сăн-питрен, ĕçченлĕхре.
Ĕç медалĕсен ĕречĕ
Хыт савăнтарать пире.

Пурнăçра çак сумлă паттăр
Тăрăшать чăн паттăрла.
Ĕçĕсемшĕн вуç вăтанмĕ,
Уншăн хыт мухтамалла.

8

Сывă пултăр сумлă ватлăх!
Тантăшсен халь хисепре.
Куçтăр вĕсенчи хăватлăх
Ăс парса тăма пире.

Иккĕш те ĕç ветеранĕ –
Иртнĕ вăрçă ачисем.
Курчĕç мăй таран тиранăн
Нушине çак тантăшсем.

«Ӳлĕм вăрçă ан хускалтăр», –
Кĕлтăвать Раççей çынни.
Мĕн курни-тӳсни çухалтăр
Аякра, таçтах кашни.

Хыççăмах

Тантăшсен мăшăрĕсем те
Пĕр ялтанччĕ, Тӳскелтен.
Çав хĕрсем те тантăшсемччĕ,
Пĕр класрах вĕренчĕç те.

Яшлăха пĕрлех иртерчĕç
Ытарми савăнăçра.

Юрласа тĕлĕнтеретчĕç
Çуллахи Микулара.

Яшлăх иртрĕ те саланчĕç
Иккĕш тĕрлĕрен енне.
Даша хуланах ăсанчĕ,
Маша юлчĕ хăй ялнех.

Тĕрĕсне калас пулсассăн
Тантăшсем – Микулайсем.
Каялла илсе пăхсассăн
Иккĕшĕ те пĕр ялсем.

...Тăрăма куçса килсеччĕ
Мăккăлĕн тăван çемйи.
Унăн ашшĕ ĕçлесеччĕ
Тӳскелти шкулта, канми.

Вĕрентни кăна та мар-ха,
Ӳркенмен лаша пăхма.
Вăл туман пĕр ĕç юлман пуль –
Пĕринчен те япăхман.

Кил пуçне вăрça илсессĕн
Куçрĕ Тăрăма çемье.
Амăш мăшăрĕ вилсессĕн
Ют ялта тăрас темен.

Мĕскĕн, тăрăшса ӳстерни
Ывăлпа хĕр ачине.
Ăнлă-пуçлă пулччăр тенĕ
Путайса ĕç аварне.

Халĕ вĕсене куратпăр
Ватлăхри кунĕсенче.
Микулай текех хăрамĕ
Тăнăç тăнă чух тĕнче.

Унăн килĕ-çурчĕ ăшă –
Хутăнать-мĕн вăл газпа.
Сирпĕнет шыв чăшăл-чăшăл –
Çăвăнать хуçи унпа.

Тăснă-мĕн юхса тухмалăх
Пăрăх та пӳртрен тула.
Куншăн пур ун савăнмалăх –
Тăрăшсан, иккен, пулать.

Тав тăвать ыр ĕçĕсемшĕн,
Ватăскер, ачисене.
Тăрăшсаччĕ хăй вĕсемшĕн,
Çамрăк чух, парса чунне.

Халĕ, ырă вулаканăм,
Сапăр пул мĕн çырнипе.
Тантăшсем тупайрĕç канăç
Йăпанса мăнуксемпе.

Манар мар, эппин, эпир те
Иртнĕ ĕçлĕ кунсене.
Чĕрери суран тек пирчĕ
Манайсан нушасене.

Çамрăк йыш телейлĕ пултăр
Хăйĕн пурăнăçĕнче.
Кирлĕ чух вылятăр-култăр,
Муллă пултăр ĕçĕнче.

кĕнеке çӳлĕкĕ

ПĔР КАÇРАХ ВУЛАСА ТУХРĂМ

(Елена Мустаеван «Уй варринче çинçе хăва» кĕнекин витĕмĕпе чăмăртаннă куç курăмĕ)

Вăхăт çитрĕ: Чăваш кĕнеке издательствинче те тĕрлĕ-тĕрлĕ вырăнти (Чăваш Енре калаçнă пек – тулайри) çыравçăсем кĕнеке хыççăн кĕнеке кăларма пуçларĕç. Ку пулăм хăйех питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ĕлĕкрех, совет саманинче, пĕр-пĕр поэт-прозаикăн хăйĕн ĕçне çутта кăларас тесен тĕпленсе пурăнакан вырăнĕнчен Шупашкара куçса каймаллаччĕ тата Писательсен пĕрлĕхне кĕмеллеччĕ. Вăт çакнашкал йĕрке хуçаланнă çĕршывра. Ку вăл, паллах, урăх регионта пурăнакан пултарулăхпа ĕçлекен çемьесемшĕн çав тери пысăк йывăрлăх пулнă. Вĕсен чунĕнче пурăна киле «провинци тунсăхĕ» ятлă тарăху кăвайчĕ амаланса кайса маçтăрсен хăватне кăкланă. Шутлатăп та, çав нуша-асаппа пайтах талантлă художникăн пултару «клапанĕ» ĕмĕрлĕхе питĕрĕннĕ-тĕр...

Кун çинчен мана чăвашсен паллă прозаикĕ, пирĕн ентеш Владимир Васильевич Плешков-Ухли пĕрмай пит хурланса-тарăхса каласа паратчĕ. Хăй вăхăтĕнче вăл Кăнна Кушкинче мăшăрĕпе Анна Тихоновнăпа ялти вăтам шкулта учительте ĕçленĕ. Владимир Васильевич шкул директорĕ пулнă. Çырас

кăмăлĕ хистенипе вăл мĕнпурне пăрахса Кушкăран Шупашкара тухса кайнă, паллă прозаик пулса тăнă. Енчен те çак темăпа пĕр-пĕр ĕç çырас пулсан («провинци тунсăхĕ» йӳтĕмпе) материалĕ çителĕклех пек туйăнать мана – сукмакне уçакан кăна тупăнтăр. Чăннипе каласан, эпĕ хам та çав «нуша çимĕçĕ», «тулай çын» шăпине питĕ лайăх тутаннă. Çиччĕрех сăвă-юмахпа «чирленĕскер», вăтăртан иртсен тин поэтсен çемйине кĕтĕм... Мĕн тăвас тетĕн, çилĕсем çавнашкал вĕрнĕ...

Кунашкал вăрăмрах кӳртĕм çырса кайнăшăн вулакансем мана, тен, каçарĕç. Вырăссем калашле, «хăвăн кĕпӳ, мĕн тесен те, çан-çурăма çывăхрах». Паянхи пасар экономики çӳлерех асăннă пăтăрмахсене пуçĕпех тĕп турĕ. Халь кĕсье тулли укçа пулсан Шупашкарта кăна мар, Мускава кайсах кĕнеке кăларма пулать. Ку майсем-шывсем начаррисен шутне кĕмеççĕ-ха вĕсем: пултар, шутласа кăлар, хăтланса пăх!

Чăваш çыравçисемшĕн, паллах, Чăваш издательстви те пур. Анчах шăп та çав организацире хайлавна çутта кăларма йывăр. Малтан унти çулталăкри тематика планне пулас ĕçне кĕртмелле. Комиссие лекнĕ кĕнекесене редакторсем пăхса тухаççĕ, юрăхлă пулсан пичетлесе кăлараççĕ. Авторне кăштах гонорар тӳлеççĕ.

Çапла майпа нумаях пулмасть кун çути курчĕ те ĕнтĕ Елена Мустаеван «Уй варринче çинçе хăва» кĕнеки.

«Самантлăх шавшăн,
йӳнĕ чысшăн
Пехил ыйтмарăм Музăран.
Тархасшăн, вулаканăм, йышăн,
Çак пĕчĕк парнеме манран»,

– тенĕ чăвашсен паллă поэчĕ Юрий Айдаш «Атнер» ятлă сăвăлла романĕнче. Елена Мустаева пирки те çаплах каламалла-тăр. Ман шутпа, самантлăх шавшăн çырман вăл хăйĕн «Уй варринче çинçе хăва» кĕнекине. Мĕншĕн çуратнă-ши вара? Чăннипех, мĕншĕн тытать-ши аллине калем вăл е ку автор? Паллах, чун хушнипе! Чун ыйтнипе!

Елена Мустаева мана хăйĕн кĕнекине парнелесен эпĕ ăна алран ямасăр пĕр каçрах вуласа тăхрăм. Вуласа тухрăм та тул çутăличчен куçăма хупаймарăм, шухăша путрăм. Темĕскерле пăтрашуллă туйăмсем чунăма темиçе пая пайласа янине чухларăм: пĕр вăхăтрах кăшкăрса ярассăм та, пуç çинченех утиялпа витĕнсе выртассăм та килчĕ – куçăм ан куртăр, хăлхам ан илттĕр! Мĕн чухлĕ тĕрĕсмарлăх, хаярлăх çĕр çинче! Çапла çав! Пурнăç – пурнăçах вăл! Сывă-чĕрĕ чух куçĕ те курать, хăлхи те илтет. Курмаллах! Илтмеллех! Шăп та шай çак принцип хуçаланнă пулĕ Елена Николаевнăн чунĕнче хăй тивĕçне пурнăçланă май. «Хăйĕн хайлавĕнче инкек-синкеклĕ хĕрарăма уй варринчи çинçе хăвапа танлаштарни пур-çке. Ку вăл чăваш халăхĕн авалхи юррине те аса илтерет», – çырать Василий Кервен, кĕнекене пухса хатĕрлекенĕ. Юрри кăна-ши вара? Мана пулсан, кунта чăваш хĕрарăмĕн-халăхĕн чăн-чăн шăпи, ăна Турă пӳрни. «Ĕмĕр-ĕмĕрĕпе çын ури айĕнче таптанатпăр», – тенĕччĕ пĕррехинче чăвашсен паллă писателĕ Хĕветĕр Уяр. Мана паян кунччен «таптанатпăр» пек туйăнать. Тĕслĕхрен, грузинсем çын умĕнче хăйсене «я – грузин» тесе мăнаçланса калаççĕ. Чăвашсем çапла «я – чуваш» тесе калаççĕ-и? Часрах «я – русский» теççĕ...

«Уй варринче çинçе хăвана», каларăм ĕнтĕ, эпĕ çав тери пăсăлса кайнă нервăсемпе вуласа тухрăм. Çакă ĕнтĕ вăл, ман шутпа, вырăс классикĕсен аслă пултарăвĕнче тĕрленнĕ психологилле хайлавăн тĕслĕхĕ. Унашкал характерлă произведенисем, пысăк-пысăк критиксем çирĕплетнĕ тăрăх (В.Г.Белинский таранччен), вырăс писателĕсем кăна çырма пултараççĕ иккен. Мĕншĕн тесен «Умом Россию не понять». Унăн, Русĕн, пачах урăхла мисси имĕш...

(Вĕçĕ пулать.)

СЕРТЕ Мишши,
ЧР Писательсен союзĕн пайташĕ.
Ульяновск хули.
«Канаш» хаçат редакцийĕн сăнӳкерчĕкĕнче: Е.Мустаева.

Валентина ТАРАВАТ

Калав

ĔМĔТĔМЕ ТАТРĂН...

(Вĕçĕ. Пуçл. 28№.)

– Эх, Галя, мĕнле юрататть вăл сана! Халь каласан та юрать ĕнтĕ: мана питĕ килĕшет Игорь, – хумханса калаçрĕ Люба.

– Пĕлтермеллеччĕ хăвăн туйăму çинчен.

– Мĕн эсĕ? Хамран култарма-и? Эс пур чухне ман çине пăхас çук вăл.

Галя ялне çитсе килчĕ. Тăванĕсене çак хаклă кучченеçпе тĕлĕнтерчĕ...

– Хĕрĕм, телейне çухатмарăн-ши? – куçран ачашшăн тинкерчĕ амăшĕ.

– Эпĕ Глеба каччă тухма сăмах панă, – пулчĕ хурав...

* * *

Виçĕ çул туслă Гальăпа Глеб. Каччă питĕ ырă кăмăллăскер. Пĕвĕ-сийĕ... Хăйне тыткалани... Игорьпа пĕрпеклĕх нумай вĕсен... Глеб – геолог. Ĕçпе пурнăç условийĕсем йывăр пулни те, цивилизацирен нумай вăхăт хушши уйрăлса пурăнни те каччăн интеллигентлăхне чакарайман...

Мĕнле паллашнине аса илсе Галя йăл кулчĕ. Тантăшĕпе Любăпа гастронома кĕнĕччĕ.

– Мĕн туянаççĕ чиперккесем? – вĕсен çумне пырса тăчĕ палламан каччă.

– Туянасси-мĕнĕ... Пăхкалатпăр ак...

– Лавккана килнĕ иккен – туянмаллах, – терĕ те каччă касса патне пырса укçа тÿлерĕ. Вара икĕ пысăк шоколад илсе хĕрсем патне пычĕ.

– Пĕтĕм кăмăлтан, – йăл кулчĕ вăл.

– Мĕн эсир? – турткаланчĕç хĕрсем...

Каччă лавккаран вĕсемпе пĕрлех тухрĕ.

– Эпĕ анне патне отпуска килнĕ. Тĕпленессе Иркутск хулинче тĕпленнĕ. Геолог эпĕ, – калаçрĕ вăл утнă май.

Гальăн тем пек шоколад татăкне çăвара хыпас килчĕ. Палламан каччăран именчĕ. Библиотекарь укçипе шоколадсем питех тутанаймăн.

– Мана кăштах хула кăтартса çÿрĕрха. Икĕ çул пулман тăван хулара.

Килĕшрĕç хĕрсем. Пĕр чарăнми калаçрĕ каччă. Тĕрлĕ истори каласа парса култарчĕ. Унтан тем аса илнĕ пек çамкине çапса илчĕ:

– Эпир паллашман та вĕт-ха.

Паллашрĕç... Каччă хĕрсене общежити çитиех ăсатрĕ. Унтан Гальăна хулран тытрĕ те:

– Кăштах юлма ыйтатăп, – терĕ.

Пĕрне-пĕри кăмăлларĕç хĕрпе каччă. Виçĕ çул хушши çулталăка пĕрре отпуска килсе каять Глеб. Хĕре парнесен айне турĕ каччă: чаплă кĕрĕк, хăлхаллă малахай, унты, атă-пушмак... Ульяновскра кăнтăрла хунарпа шырасан та тупаймăн кун пек мула.

– Иркутск пасарĕнче аттепе аннене кăна тупса илейместĕн, – ăшшăн кулать вăл.

Илесшĕн мар Галя парнисене...

– Ку сана сутăн илнине пĕлтермест. Мана каччă пыма килĕшмесен – хутранситрен аса илĕн...

Кăçал сентябрь уйăхĕнче таврăнмалла вăл. Туй тума каласса татăлнă...

Мĕнле вăл унта? Сывлăхĕ еплерех? Ĕç условийĕсем çăмăл мар унăн, паллах...

А.Наумов сăнÿкерчĕкĕ.

Нумаях каласмасть вăл ĕç çинчен.

– Санăн пурнăç условийĕсем лайăх пулĕç. Ĕç пирки те чăрмавсем пулмĕç, – тет яланах.

Чаплă туй туса ирттерчĕç. Иркутск хулинче тĕпленчĕ çамрăк çемье. Пĕр пÿлĕмлĕ хăтлă хваттер Глебăн çĕнĕ çуртра. Лайăх сĕтел-пукан. Хваттерĕ пысăк. Маччи çÿллĕ. Кухни вăрăм, сарлака. Мĕн кирлĕ – веçех пур... Хăйсен çуртĕнчен инçех мар библиотекăна ĕçе вырнаçрĕ Галя. Экспедицисене вертолетпа вĕçеççĕ геологсем. Икшер уйăх киле таврăнайманни те пулать. Пушă вăхăт нумай Гальăн. Хулапа паллашать вăл пĕчĕккĕн...

Хула Çĕпĕрĕн хĕвел тухăç енче вырнаçнă. Урамĕсем Ангара юханшывĕн икĕ енĕпе ларса тухнă. Ангарана Иркут ятлă юханшыв юхса кĕрет. Истори тăрăх Иркутск ят хулана çав юханшыв ячĕпе панă. Байкал кÿллипе Иркутск хушши утмăл утă километр. Кунти çанталăка хăнăхма Гальăна çăмăлах пулмарĕ. Вичкĕн континентла климат. Хĕл пилĕк уйăха тăсăлать. Сивĕсем хĕрĕх градус таранах пулаççĕ. Халăх, тĕпрен илсен, кĕрĕкпе, çăматăпа çÿрет. Çуркунне кĕске те типĕ килет. Çуллан пĕрремĕш çурри типĕ те шăрăх, тепринче витререн тăкнă пек çумăр çăвать. Кĕркунне типĕ. Сывлăш температури пĕр ăшăнать, пĕр сивĕнет.

Илемлĕ Иркутск хули. Пĕр эрне пурăнсанах упăшки Гальăна театра илсе кайрĕ. Çурт патне çитсенех Гальăн куçĕпуçĕ алчăрарĕ. Кун пек илемлĕ çурт вăл нихçăн та курман. Ульяновскри драмтеатра танлаштараймăн унпа. Шала кĕрсен çăварне карсах пăрахрĕ. Тĕлĕннĕ арăмне Глеб театра мĕнле çĕкленине каласа пачĕ. Ваттисем каланă тăрăх, ĕлĕкхи купсасем укçа пухса çĕкленĕ çак çуртра. Хăйсен хушшинче каласса татăлнă: Мускаври Пысăк театртан кая ан пултăр илемĕпе... Вĕсем Питĕртен чаплă архитектора чĕнсе илнĕ...

Тăван енпе çыхăну çухатмаççĕ Исаевсем. «Ульяновская правда» хаçат çырăнса илеççĕ. Тăван облаçра, хулара мĕн пулса иртнине пĕлсех тăраççĕ...

Çулталăкран ывăл çуралчĕ çемьере. Игорь ят пачĕç. Ачи çуралсан Глеб Иванович Иркутскри управление ĕçе куçрĕ. Управленийĕ инçех мар. Çуранах çÿрет ĕçе.

Пĕррехинче лавккаран тухсан Гальăна пĕрле ĕçлекен хĕрарăм тытса чарчĕ.

– Глеб Ивановичăн ĕлĕкхи савнийĕ çак лавкка хуçи, – пĕлтерчĕ «ыр суналкан», – эс пĕлместĕн пулĕ.

– Пĕлмен те... Пĕлессĕм те килмест... Тав тумастăп сире çак хыпаршăн. Вăл ăна каччă илмен... Мана суйланă... – куçне çиллессĕн выляттарса пăхса илчĕ хĕрарăм çине. Çунтарса яратчĕ пуль...

Глеба каласа памарĕ çак калаçу пирки. Хăй вара вăл лавккана урăх çÿремерĕ...

* * *

Пĕррехинче Люба ĕçрен таврăнатчĕ. Çулла. Çанталăк тĕлĕнмелле илемлĕ. Лăпкă кун. Шăрăх та мар. Васкамасăр утать хĕр трамвай чарăнăвĕнчен. Общежити патне çитрĕ те юнашар беседкăра ларакан палланăрах сăнлă арçынна курчĕ. Сăнарах пăхрĕ те – Игорь Выселова палласа илчĕ. Чĕри саваннипе кăкăрта тăпăртатать кăна... «Эх, ман пата, мана курасшăн килнĕ-çке Игорь. Кăмăллать пулас мана. Атту мĕн туса çÿремелле унăн кунта?» – ташша яманни кăна хĕр.

– Игорь? – çывхарчĕ вăл каччă патнелле. Ыталаса илменни кăна. – Мĕн çаврăса килчĕ сана кунта?

«Сана курма, саншăн килтĕм эпĕ. Саватăп эпĕ сана», – теессе кĕтрĕ Люба... Савăнни кăлăххах пулчĕ...

– Люба, лар çума. Галя пирки, унăн пурнăçĕ çинчен пĕлме килтĕм эпĕ. Манаймастăп эпĕ ăна... – шăппăн калаçрĕ каччă.

– Ачи пур унăн, – кăшкăрнă пекех каларĕ Люба.

– Маншăн ку чăрмав мар. Йывăр пулсан – таврăнтăр. Çырса пĕлтер...

Пуçран чукмарпа çапнă пекех пулчĕ ку Любăшăн. Игорь ун çинчен виççĕ выртса та пĕрре тĕлленмен. Галя, ав, ачапа та кирлĕ...

Веçех тĕрĕсне çырса пĕлтерчĕ Люба тантăшне... Хумхантармарĕ ку çыру Галя чĕрине. Вуларĕ те сĕтел çине хучĕ. Хучĕ те манса кайрĕ.

Каçхине ĕçрен килнĕ упăшки çырăва тытрĕ те: – Мана валли салам пур-и унта? – тесе нихçан пулманнине вулама пуçларĕ. Мĕн хистерĕ ăна?

– Йывăр-им сана манпа? Юлташусене ÿкĕнсе çыратăн-и? – ыйтрĕ шăппăн.

– Куçна усарах вула! – кăшкăрнă пекех каларĕ хĕрарăм. – Эпĕ ăна мар, сана суйланă. Мускав хулине шăнса вилмелли Иркутскпа улăштарнă. Урăх илтем мар!

Упăшки шăпах пулчĕ...

Йĕпе çине сапа теççĕ халăхра... Ку калаçу хыççăн тепĕр куннех почта ещĕкне тĕрĕслеме тухнă Глеб:

– Тăван хаçат килчĕ! – тесе савăнса чупса кĕчĕ, ларчĕ те хаçата шĕкĕлчеме пуçларĕ...

– Кил-ха, вула. Леш, манран сана туртса илесшĕн пулнă «мильтон» çинчен çырман-и кунта?

Тĕрĕс те, хаçатри портретран Игорь Выселовăн ăслă, шухăшлă куçĕ Галя çине шăтарасла пăхать...

– Тĕрĕс те çавă ку. Кунта ун çинчен кăна мар, Выселовсен милиции династийĕ çинчен сăмах, çиччĕн вĕсем: хурахсем вĕлернĕ ашшĕнчен пуçласа мăнукĕсем таран... «Выселов Игорь Дмитриевич – начальник отдела УВД Моссовета», – тесе çырнă портрет айĕнче.

– Нумай çухатнă эсĕ. Вĕсем министрсемпе канашлусем ирттереççĕ...

Ним те чĕнмерĕ Галя.

Ывăлĕ икĕ çул тултарсан Галя тăван ене çитсе килме шутларĕ. Кăтартмалла-çке асламăш-кукамăшне, аслашшĕ-кукашшĕне мăнукне. Глеба ĕçрен ямарĕç. Аэропортран упăшки ăсатса ячĕ. Малтан Мускава вĕçмелле. Мускавран вара – Чĕмпĕре. «Внуково» текен аэропорта çитни сисĕнмерĕ те. Пĕчĕк Игорь çеç вĕçев вăхăтĕнче питĕ канăçсăрланчĕ, йĕрмĕшрĕ. Самолет мĕнле ларчĕ – ача çапла йĕрмĕшме чарăнчĕ. Автобусран тухсанах: «Ман çырла çиес килет!» – тесе кăшкăрчĕ те, вĕçеррĕн чупса кайрĕ. Ывăлĕ хыççăн чупакан амăшĕ чутах милиции подполковникне пырса çапăнмарĕ. Вăл вăхăтра Игорь арçын аллинчеччĕ ĕнтĕ.

– Галя?! – тĕлĕннипе çăварне карса пăрахрĕ арçын. – Ахальтен мар сана тĕлĕкре курнă. Ку пăхаттир кам? Мĕн ятлă эсĕ? – пуçĕнчен ачашларĕ ачана арçын.

– Иголь, – ахăлтатса кулать шăпăрлан.

– Игорь? Тавах сана, – куçран тинкерчĕ хĕрарăма çухалса кайнă арçын.

Ку Игорь Выселов пулчĕ. Вăл та Ульяновска вĕçет иккен. Пĕр-пĕрин пурнăçĕ çинчен веçех ыйтса пĕлчĕç.

– Çак маттуркка пирĕн ывăлăмăр пулма пултарнă... Ĕмĕтĕме татрăн... Тупаймарăм-ха сан пеккине, – салхуллăн пăхрĕ арçын.

– Тупăн-ха, тупатăнах, – именчĕклĕн кулчĕ хĕрарăм.

мчс пĕлтерет

ТĔРĔСЛЕВСЕМ ИРТТЕРЕÇÇĔ

Хабаровск крайĕнчи «Холдоми» палаткăллă лагерьте пушар тухса тăватă ача пурнăçне татнă хыççăн çĕршывра тĕрĕслевсем иртттерме пуçланă. ТР Патшалăх пушар надзорĕн инспекторĕсем Раççей МЧСĕн пуçлăхĕ Е.Зиничев хушнипе ача-пăча лагерĕсемпе ытти кану базисенче пушар хăрушсăрлăхĕн требованийĕсене пăхăннине тĕрĕслеççĕ.

Юнкун инспекторсем Раççей ДОСААФĕн ТР Тĕп аэроклубĕн никĕсĕнчи «Çамрăк парашютист» ача-пăча палаткăллă лагерьне çитнĕ. Телее, кунта йĕркене пăснă нимĕнле тĕслĕхе те асăрхаман. Ачасен канăвне пĕтĕмпех кирлĕ пек йĕркеленĕ. Ачасем палаткăсенче пурăнаççĕ пулин те, апата кăвайт çинче мар, столовăйĕнче пĕçереççĕ кунта. Палаткăсене çутă кĕртмен, кашнинчех пушар сӳнтермелли хатĕрсем пур. Вут тухас пулсан аэроклубăн пушар командин автоцистерни яланах пушар сӳнтерме хатĕр тăрать. Воспитательсем пушар хăрушсăрлăхĕ, çынсене шывра путма пуçласан çăлас енĕпе инструктаж иртнĕ. Ачасене те пушар тухас пулсан мĕн тумалли пирки лайăх ăнлантарнă.

Хальхи вăхăтра республикăра пурĕ 123 ача-пăча лагерĕ ĕçлет, çав шутран 13-шĕ – палаткăллă лагерь. Вĕсенче 18360 ача канать. Маларах, лагерьсем ĕçлеме пуçличчен, Патшалăх пушар надзорĕн инспекторĕсем йĕркене пăснă 264 ăнсăрта тупса палăртнă пулнă, вĕсене пурне те йĕркене кĕртнĕ.

криминал

ЛЕÇМЕ КАЙНĂ ТА...

Хусанта таксист пулса ĕçлекен çамрăк хăйĕн пурнăçĕ çапла синкерле вĕçленессе тĕлĕкре те тĕлленмен пуль. Июлĕн 21-мĕшĕнче йĕрке хуралçисем патне Хусанта такси службинче ĕçленĕ çын çухални пирки заявлени панă. Арçын такси службинче ĕçленĕ-мĕн. Следовательсем пĕлтернĕ тăрăх, вăл июлĕн 20-мĕшĕнче пассажирсене леçме Ижевск хулине кайнă та хыпарсăр çухалнă.

Следстви тĕпчевĕ тăрăх, Ижевскра пурăнакан виçĕ çын водителе вĕлерсе унăн машинине туртса илес тĕллевпе Хусана килнĕ. Пĕр пысăк суту-илӳ центрĕн парковкинче вĕсем хăйсене Ижевска леçме килĕшекен таксиста шырама пуçланă. 25 çулти пĕр водитель килĕшнĕ вĕсене палăртнă вырăна çитерме. Çул çинче преступниксем водителе кабельпе пăвса вĕлернĕ те виллине вăрманта пытарнă, машинине вара Ижевск хулине хăваласа кайнă. Çак преступление тума пултарнă виçĕ çынна тытса чарнă, следстви пырать.

Вера АЛЕКСАНДРОВА хатĕрленĕ.

Эрнелĕх
29.07 – 04.08

ТАКА 21.III – 20.IV
Кăмăл-туйăм, психологилле лару-тăру енчен кăткăс тапхăр. Хăвăра ĕç режимĕнче тытма çăмăл пулмĕ. Çапах ал усма кирлĕ мар, пĕтĕм тĕнче хирĕç тăнă пек туйăнсан та. Юхăма хирĕç ишĕр, вара çитĕнӳсем те нумай кĕттермĕç.

ВĂКĂР 21.IV – 20.V
Кăмăлсем нихçанла мар ырă та савăк пулĕç, пысăк хавхалану туятăр. Шăп та лăп ку эрнере харпăр пурнăç тата юрату енĕпе шăпа усăмланать. Профессийĕ творчествăпа çыхăннисен ĕçре питĕ лайăх сыпăнса пырать. Хăвăра шанăр.

ЙĔКĔРЕШСЕМ 21.V – 21.VI
Шел пулин те, пурнăçăн кашни сферинчех ĕç-пуç сире кирлĕ пек пулса пымĕ. Хăвăра мĕн кирлине çирĕп татса памасан, мĕн-тĕр тума, çĕнĕ проект пуçлама усси çук. Харпăр хутшăнусемпе çыхăннă хăшпĕр принципсене çĕнĕрен пăхса тухма тивет. Эсир йăнăшма пултаратăр.

РАК 22.VI – 22.VII
Кăштах сывлăш çавăрса яма пултаратăр. Мĕнпур ĕçе юратнă та сывăх çынсем, тăвансем хăйсем çине илĕç. Вĕсене канашсем, хушусем парса ан аптратăр. Ку вăхăтра хĕррипче пăхса-итлесе тăнинчен аванраххи нимĕн те çук. Ĕçпе çыхăннă проектсене çитес эрнене хăварăр.

АРĂСЛАН 23.VII – 23.VIII
Сывлăхăра упрăр. Ăс-хакăл енчен те, вăй-хал енчен те ытлашши ывăнмалла мар. Çурма вăйпа ĕçленипе нимĕн те пулмĕ. Укçа-тенкĕпе çыхăннă ĕçсене çитес вăхăта хăварăр, ыйтусем урăх çынсемпе çыхăнсан уйрăмах.

ХĔР 24.VIII – 23. IX
Кил-тĕрĕшри вак-тĕвек кăлтăксене шута илмесен эрне тăршшĕпех хăвăра телейлĕ туятăр. Çăлтăрсем юратупа, çемье пурнăçĕпе çыхăннă чи вăрттăн ĕмĕтсем пурнăçланасса шантараççĕ. Карьера енĕпе те çитĕнӳсем тăватăр.

ТАРАСА 24.IX – 23.X
Эрне хĕвĕшӳллĕ те активлă пулĕ. Ĕçре те, килте те ялан васкама тивĕ. Ним тума та вăхăт çитменнине туятăр. Çавăнпа хăвăра мĕн кирлĕреххине тĕрĕс палăртăр. Харăсах темиçе ĕç ан тăвăр. Теветкеллĕ проектсене ан хутшăнăр.

СКОРПИОН 24.X – 22.XI
Ĕçпе çыхăннă ыйтусем чарăнса ларма, харпăр хутшăнусем чăхăмлана пултараççĕ. Çавăнпа сывлăш çавăрса яма тăрăшăр. Сирĕн хăвăр пĕччен пулма тăрăшмалла. Отпуск илĕр, сывлăхăра çирĕплетĕр. Пĕччеңнисен тинех чун савни тупас шанчăк çуралать.

УХĂÇĂ 23.XI – 21.XII
Ку вăхăтра илĕртӳлĕх ӳснипе çынсене хăвăр пата магнит пек туртатăр. Кунпа харпăр интерессене пурнăçланă çĕрте усă курма тăрăшăр. Тĕрлĕ ыйтусене, тахçанах пуçланă кăткăс ĕçсене çăмăллăн татса паратăр. Сире никам та хирĕç тăраймĕ.

ТУ КАЧАКИ 22.XII – 20.I
Савăнăç туйăмĕ парнелекен сюрпризсемпе парнесем нумай пулĕç. Эрне варринчен пуçласа эсир кашни çын тимлĕхĕнче пулатăр. Хăвăра пăхса илем кӳме вăхăт тупăр. Шăпаллă тĕлпулу пулма пултарать.

ШЫВТĂКАН 21.I – 20.II
Укçа-тенкĕ ĕçĕсене йĕркене кĕртсе çемье бюджетне тепĕр хут пăхса тухма вăхăт çитнĕ. Тупăш ӳстерме питĕ лайăх майсем пулĕç. Кĕтме пăрахнă парăма парса татĕç. Хăвăр тахçан кивçен илнине те каçаракансем пулĕç.

ПУЛĂСЕМ 21.II – 20.III
Ку эрнере интереслĕ паллашусемпе тĕлпулусем, ĕçпе е харпăр пурнăçпа çыхăннă çулçӳревсем йышланаççĕ. Усăллă ĕçлĕ калаçусем пулаççĕ. Пулăмсем питĕ хăвăрт аталанса пырĕç. Ăнăçăва хăратас мар тесен юхăм май пырăр.

ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕВИДЕНИЙĔ

Тунтикун, утă уйăхĕн 29-мĕшĕ
05.00 «Эсĕ кайрăн та...». Драма (12+)
07.00 «Акилбупсер» (6+)
07.30, 13.30 «Цифровой код» (12+)
08.00 «Я люблю тебя, жизнь». Юбилейный вечер Станислава Кондратьева». (12+)
11.00 «Битва ресторанов» (16+)
12.00 «Спальный район». Многосерийный фильм (16+)
13.00, 15.00, 19.00, 00.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
13.05 «Вектор комфорта» (12+)
14.00, 16.00, 20.00, 23.00 «Республика». Информационная программа (12+)
14.05 «Мультимир» (6+)
14.30 «Жизнь в движении» (12+)
15.05, 03.00 «Зверская работа». Документальный фильм (16+)
16.05, 02.30 «Гении и злодеи. Конрад Лоренц» (16+)
16.30, 04.00 «Женская консультация». Сериал (16+)
17.30 «Следователь Протасов». Многосерийный фильм (16+)
18.30, 02.00 «Республика в деталях» (6+)
19.30, 23.30 «Время вкуса» (12+)
20.30 «Самана» (12+)
21.30 «Сире Никонорова гражданка кĕтет». Чăвашла куçарнă фильм (12+)
00.30 «Вариант «Омега». Драма (16+)

Ытларикун, утă уйăхĕн 30-мĕшĕ
05.00, 13.00, 15.00, 19.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
05.30 «Время вкуса» (12+)
06.00, 14.00, 16.00, 20.00, 23.00, 00.00 «Республика». Информационная программа (12+)
06.30 «Акилбупсер» (12+)
07.00 «Сире Никонорова гражданка кĕтет». Чăвашла куçарнă фильм (12+)
09.00, 18.30, 13.20, 02.00 «Республика в деталях» (6+)
09.30 «Самана» (12+)
10.30 «След в истории» (12+)
11.00 «Битва ресторанов» (16+)
12.00 «Спальный район». Многосерийный фильм (16+)
13.05 «Бухты-барахты» (6+)
14.05 «Мультимир» (6+)
14.30 «Вектор комфорта» (12+)
15.05, 03.00 «Зверская работа». Документальный фильм (16+)
16.05, 02.30 «Легенды мирового кино. Луи де Фюнес» (16+)
16.30 «Женская консультация». Сериал (16+)
17.30, 04.00 «Следователь Протасов». Многосерийный фильм (16+)
19.30, 23.30 «Ылтăн çунçерен» (12+)
20.30 «Цифровой код» (12+)
21.00 «Акатуй 2019» (12+)
00.30 «Зверобой». Драма (16+)

Юнкун, утă уйăхĕн 31-мĕшĕ
05.00, 13.00, 15.00, 19.00, 00.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
05.30 «Ылтăн çунçерен» (12+)
06.00, 14.00, 16.00, 20.00, 23.00 «Республика». Информационная программа (12+)
06.30 «Цифровой код» (12+)
07.00 «Акатуй 2019» (12+)
09.00, 13.30, 18.30, 02.00 «Республика в деталях» (12+)
09.30 «Пĕрремĕш утăмсем». Юмах (12+)
11.00 «Битва ресторанов» (16+)
12.00 «Спальный район». Многосерийный фильм (16+)
13.05 «Бухты-барахты» (6+)
14.05 «Мультимир» (6+)
14.30 «След в истории» (12+)
15.05, 00.30, 03.00 «Зверская работа». Документальный фильм (16+)
16.05, 02.30 «Гении и злодеи. Рудольф Дизель» (12+)
16.30, 04.00 «Женская консультация». Многосерийный фильм (16+)
17.30 «Следователь Протасов». Многосерийный фильм (16+)
19.30, 23.30 «Литература тĕпелĕ» (12+)
20.30 «Тăвансем, сире савса». Антонина Лукинан пултарулăх касĕ (12+)

Кĕçнерникун, çурла уйăхĕн 1-мĕшĕ
05.00, 13.00, 15.00, 19.00, 23.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
05.30 «Литература тĕпелĕ» (12+)
06.00, 14.00, 16.00, 20.00, 00.00 «Республика». Информационная программа (12+)
06.30 «Тăвансем, сире савса». Антонина Лукинан пултарулăх касĕ (12+)
09.00 «Республика в деталях» (12+)
09.30 «Уйăх тулнă каç». Илемлĕ фильм (12+)
11.00 «Битва ресторанов» (16+)
12.00 «Спальный район». Многосерийный фильм (16+)
13.05 «Бухты-барахты» (6+)
13.30 «Республика в деталях» (12+)
14.05 «Мультимир» (6+)
14.30 «След в истории» (12+)
15.05, 03.00 «Зверская работа». Документальный фильм (16+)
16.05, 02.30 «Легенды мирового кино. Тамара Семина» (12+)
16.30, 04.00 «Женская консультация». Многосерийный фильм (16+)
17.30 «Следователь Протасов». Многосерийный фильм (16+)
18.30, 02.00 «Нулевой километр» (12+)
19.30, 23.30 «Вектор комфорта» (12+)
20.30 «Жизнь в движении» (12+)
21.00 «Вăрмана юлнă çамрăклăх». Драма (12+)
00.30 «В России идет снег». Драма (16+)

Эрнекун, çурла уйăхĕн 2-мĕшĕ
05.00, 13.00, 15.00 «Республика». Хыпарсен кăларăмĕ (12+)
05.30 «Вектор комфорта» (12+)
06.00, 14.00, 16.00, 20.00, 23.00 «Республика». Информационная программа (12+)
06.30, 14.30, 01.00 «Жизнь в движении» (12+)
07.00 «Вăрмана юлнă çамрăклăх». Драма (12+)
09.00 «Вĕç çӳлелле». Камит (12+)
10.30 «След в истории» (12+)
11.00 «Битва ресторанов» (16+)
12.00 «Спальный район». Многосерийный фильм (16+)
13.05 «Бухты-барахты» (6+)
13.30 «Нулевой километр» (12+)
14.05 «Мультимир» (6+)
15.05, 04.00 «Повелители». Документальный фильм (12+)
16.05 «Пряничный домик. Искусство хоомей» (12+)
16.30 «Женская консультация». Многосерийный фильм (16+)
17.30 «Следователь Протасов». Многосерийный фильм (16+)
18.30 «Республика в деталях» (12+)
19.00, 00.00 «Эрне». Хыпарсен тишкерĕвĕ (12+)
19.30, 23.30 «Кил ăшши» (12+)
20.30 «Тăван юрă». Музыка премийĕ (12+)

Шăматкун, çурла уйăхĕн 3-мĕшĕ
05.00 «Эрне». Хыпарсен тишкерĕвĕ (12+)
06.00 «Республика». Информационная программа (12+)
06.30, 02.30 «Тăван юрă». Музыка премийĕ (12+)
09.00 «Жизнь в движении» (12+)
09.30 «Маша и медведь» (6+)
10.30 «Встретимся у фонтана». Классика СССР (12+)
12.00 «Последняя кража» (16+)
13.00, 01.00 «Год в Таскане». М/фильм (16+)
15.00 «Укса чул кастарать». Икĕ пайлă çемье пăтăрмахĕ (12+)
17.30 «Кил ăшши» (12+)
18.00 «Самана» (12+)
19.00, 23.00 «Ырă кăмăлпа» (12+)
19.30 «Этемлĕх управçи Анне». Алина Савельева пултарулăх касĕ (12+)
22.00 «Стань первым!». Открытие благотворительной акции Первого канала (6+)
23.30 «Учим чувашский» (12+)
00.00 «Повелители». Д/фильм (12+)

Вырсарникун, çурла уйăхĕн 4-мĕшĕ
05.00 «Этемлĕх управçи Анне». Алина Савельева пултарулăх касĕ (12+)
08.00 «Стань первым!». Открытие благотворительной акции Первого канала (6+)
09.00 «Эрне». Хыпарсен тишкерĕвĕ (12+)
10.00 «Ырă кăмăлпа» (12+)
10.30 «Какая у вас улыбка». Классика СССР (12+)
12.00 «Казачья застава». Концерт (12+)
13.00, 01.30 «Год в Таскане». М/ фильм (16+)
15.00 «Шанель пике». Камит (12+)
17.30 «Маша и медведь» (6+)
18.00 «Стань первым!». Праздничный концерт в Ледовом дворце «Чебоксары-Арена» (6+)
22.00 «Кĕмĕл сасă 2014» (12+)
01.00 «Жизнь в движении» (12+)
04.30 «Мультимир» (6+)

ТЕЛЕКАНАЛСЕН ПРОГРАММИ

ПОНЕДЕЛЬНИК

29 ИЮЛЯ

1-й КАНАЛ

05.00,09.25 «Доброе утро» (16+)
09.00,03.00 Новости (16+)
09.55 «Модный приговор» (6+)
10.55 «Жить здорово!» (16+)
12.00,15.00, 18.00 Новости (с субтитрами) (16+)
12.15,17.00,18.25,01.10 «Время покажет» (16+)
15.15 «Давай поженимся!» (16+)
16.00 «Мужское/Женское» (16+)
18.50 «На самом деле» (16+)
19.50 «Пусть говорят»(16+)
21.00 «Время» (16+)
21.30 Т/с «ДВОЕ ПРОТИВ СМЕРТИ» (12+)
23.30 «Эксклюзив» (16+)
03.05 «Время покажет» (16+)

РОССИЯ1

05.00,09.25 Утро России (12+)
09.00,11.00,14.00,20.00 Вести (12+)
09.55 «О самом главном». Ток-шоу (12+)
11.25,14.25,17.00,20.45 Вести. Местное время (12+)
11.45 «Судьба человека с Борисом Корчевниковым» (12+)
12.50,18.50 «60 Минут». Ток-шоу с Ольгой Скабеевой и Евгением Поповым (12+)
14.45 «Кто против?» Ток-шоу (12+)
17.25 «Андрей Малахов. Прямой эфир» (16+)
21.00 Т/с «РАЯ ЗНАЕТ ВСЁ!» (12+)
22.55 Т/с «ДОКТОР РИХТЕР» (16+)
01.05 Т/с «МОСКОВСКАЯ БОРЗАЯ» (12+)
03.05 Т/с «СЕМЕЙНЫЙ ДЕТЕКТИВ» (12+)

ТНВ

05.00 «Жырлыйк эле!» (6+)
05.50,07.00 Татарстан хэбэрлэре (12+)
06.00,02.00 «Манзара» (6+)
08.00,14.30,19.30,21.30 Новости Татарстана (12+)
08.10 «Здравствуйте!» (12+)
09.00,00.35 Т/с «ДЕТЕКТИВНОЕ АГЕНТСТВО «ИВАН ДА МАРЬЯ» (16+)
10.00,17.00 Т/с «ЯЗМЫШЛАРДАН УЗМЫШ ЮКИКЭН...» (12+)
10.55,18.00 «Татарлар» (12+)
11.45,23.30 Т/с «ЖИЗНЬ КЛИМА САМГИНА» (0+)
13.00 «Семь дней» (12+)
14.45 «Аулак ой» (6+)
15.15 Т/с «ДЕТЕКТИВЫ ИЗ ТАБАКЕРКИ» (12+)
16.30 Мультфильмы (0+)
18.30,20.30 Татарстан хэбэрлэре (12+)
19.00 «Таяну ноктасы» (16+)
20.00,22.00 «Вызов 112» (16+)
20.15 «Кучтэнэч» (0+)
21.00 «Бизнес ментор» (12+)
22.10 Х/ф «НИККОЛО ПАГАНИНИ» (16+)
03.40 «Караоке бэйге» (6+)
04.30 «Оныта алмыйм...» (0+)

24 ТАТАРСТАН

0.00, 1.00, 2.00, 3.00, 4.00, 5.00, 6.00, 7.00, 8.00, 9.00, 10.00, 11.00, 12.00, 13.00, 14.00, 15.00, 16.00, 17.00, 18.00, 19.00, 20.00, 21.00, 22.00, 23.00 Новости Татарстана-24 (16+)
0.30, 1.30, 2.30, 3.30, 4.30, 5.30 Главное за неделю (16+)
6.30, 7.30, 8.30, 10.30, 16.30, 21.30 Полезные новости. Новости экономики, Суть дела с Григорием Тинским, iNews, Мобильный репортер, Дела судебные (16+)
9.30, 12.30 Самобытные культуры (16+)
11.30, 14.30 Удивительный Мир (16+)
13.30, 15.30, 19.30 Главные новости (16+)
17.30, 20.30, 23.30 Актуальный разговор (16+)
18.30, 22.30 Хроника происшествий (16+)
18.45, 22.45 Око прокурора (16+)

ВТОРНИК

30 ИЮЛЯ

1-й КАНАЛ

05.00,09.25 «Доброе утро»
09.00 Новости
09.55 «Модный приговор» (6+)
10.55 «Жить здорово!» (16+)
12.00,15.00,18.00 Новости (с субтитрами)
12.15,17.00,18.25,00.30 «Время покажет» (16+)
15.15 «Давай поженимся!» (16+)
16.00 «Мужское/Женское» (16+)
18.50 «На самом деле» (16+)
19.50 «Пусть говорят» (16+)
21.00 «Время» (16+)
21.30 Т/с «ДВОЕ ПРОТИВ СМЕРТИ» (12+)
23.30 Премьера. «Про любовь» (16+)

РОССИЯ1

05.00,09.25 Утро России (16+)
09.00,11.00,14.00,20.00 Вести (16+)
09.55 «О самом главном» (12+)
11.25,14.25,17.00,20.45 Вести. Местное время (16+)
11.45 «Судьба человека с Борисом Корчевниковым» (12+)
12.50,18.50 «60 Минут» (12+)
14.45 «Кто против?» Ток-шоу (12+)
17.25 «Андрей Малахов. Прямой эфир» (16+)
21.00 Т/с «РАЯ ЗНАЕТ ВСЁ!» (12+)
23.00 Т/с «ДОКТОР РИХТЕР» (16+)
01.20 Т/с «МОСКОВСКАЯ БОРЗАЯ» (12+)
03.10 Т/с «СЕМЕЙНЫЙ ДЕТЕКТИВ» (12+)

ТНВ

05.00 «Йороктон-йорэккэ»(6+)
05.50, 07.00,18.30, 20.30 Татарстан хэбэрлэре (12+)
06.00,02.00 «Манзара» (6+)
08.00,14.30,19.30,21.30 Новости Татарстана(12+)
08.10 «Здравствуйте!» (12+)
09.00, 00.40 Т/с «ДЕТЕКТИВНОЕ АГЕНТСТВО «ИВАН ДА МАРЬЯ» (16+)
10.00,17.00 Т/с «ТУЗГАН ТОРАКТАН КУЧКЭНДЭ» (12+)
10.55 «Родная земля» (12+)
11.30 «Татарлар»(12+)
12.00, 23.30 Т/с «ЖИЗНЬ КЛИМА САМГИНА» (0+)
13.30 «Путь» (12+)
13.45 «Не от мира сего...»(12+)
14.00 Док. фильм (12+)
14.45 «Дорога без опасности» (12+)
15.00 «Здоровая семья: мама, папа и я» (6+)
15.15 Т/с «ДЕТЕКТИВЫ ИЗ ТАБАКЕРКИ» (12+)
16.30 Мультфильмы (0+)
18.00 «Мин» (12+)
19.00,01.30 «Таяну ноктасы» (16+)
20.00, 22.00 «Вызов 112» (16+)
20.15 «Кучтэнэч»(0+)
21.00 Х/ф «НИККОЛО ПАГАНИНИ» (16+)
22.10 «Никколо Паганини» (продолжение) (16+)
23.00 «Видеоспорт» (12+)
03.40 «Караоке бэйге» (6+)
04.30 «Оныта алмыйм...» (0+)

24 ТАТАРСТАН

0.00, 1.00, 2.00, 3.00, 4.00, 5.00, 6.00, 7.00, 8.00, 9.00, 10.00, 11.00, 12.00, 13.00, 14.00, 15.00, 16.00, 17.00, 18.00, 19.00, 20.00, 21.00, 22.00, 23.00 Новости Татарстана-24 (16+)
0.30, 1.30, 2.30, 3.30, 4.30, 5.30, 13.30, 15.30, 19.30 Главные новости (16+)
6.30, 7.30, 8.30, 10.30, 16.30, 21.30 Полезные новости. Новости экономики, Суть дела с Григорием Тинским, iNews, Мобильный репортер, Дела судебные (16+)
09.30, 12.30 Самобытные культуры (16+)
11.30, 14.30 Удивительный Мир (16+)
17.30, 20.30, 23.30 Актуальный разговор (16+)
18.30, 22.30 Великие сражения: кровь и сталь (16+)

СРЕДА

31 ИЮЛЯ

1-й КАНАЛ

05.00,09.25 «Доброе утро» (16+)
09.00,03.00 Новости (16+)
09.55 «Модный приговор» (6+)
10.55 «Жить здорово!» (16+)
12.00,15.00, 18.00 Новости (с субтитрами) (16+)
12.15,17.00,18.25,00.30 «Время покажет» (16+)
15.15 «Давай поженимся!» (16+)
16.00 «Мужское/Женское» (16+)
18.50 «На самом деле» (16+)
19.50 «Пусть говорят» (16+)
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ПЕТЕРБУРГ. ЛЮБОВЬ. ДО ВОСТРЕБОВАНИЯ» (12+)
23.30 «ВДНХ» (0+)
03.05 «Время покажет (16+)

РОССИЯ1

05.00,09.25 Утро России (16+)
09.00,11.00,14.00,20.00 Вести (16+)
09.55 «О самом главном». Ток-шоу (12+)
11.25,14.25,17.00,20.45 Вести. Местное время (16+)
11.45 «Судьба человека с Борисом Корчевниковым» (12+)
12.50,18.50 «60 Минут». Ток-шоу с Ольгой Скабеевой и Евгением Поповым (12+)
14.45 «Кто против?» Ток-шоу (12+)
17.25 «Андрей Малахов. Прямой эфир» (16+)
21.00 Т/с «РАЯ ЗНАЕТ ВСЁ!» (12+)
23.00 Т/с «ДОКТОР РИХТЕР» (16+)
01.20 Т/с «МОСКОВСКАЯ БОРЗАЯ» (12+)
03.10 Т/с «СЕМЕЙНЫЙ ДЕТЕКТИВ» (12+)

ТНВ

05.00 «Кэмит жэвит» (16+)
05.50,07.00,18.30,20.30 Татарстан хэбэрлэре(12+)
06.00,02.00 «Манзара» (6+)
08.00,14.30,19.30,21.30 Новости Татарстана (12+)
08.10 «Здравствуйте!» (12+)
09.00,00.45 Т/с «ДЕТЕКТИВНОЕ АГЕНТСТВО «ИВАН ДА МАРЬЯ» (16+)
10.00,17.00 Т/С «ТУЗГАН ТОРАКТАН КЭЧКЭНДЭ» (12+)
10.55,04.30 «Оныта алмыйм...». Ретроконцерт (0+)
11.30 «Татарлар» (12+)
12.00,23.30 Т/с «ЖИЗНЬ КЛИМА САМГИНА» (0+)
13.30 «Каравай»(6+)
14.00 «Секреты татарской кухни»(12+)
14.45 «Эдэби хэзинэ»(12+)
15.15 Т/с «ДЕТЕКТИВЫ ИЗ ТАБАКЕРКИ» (12+)
16.30 Мультфильмы (0+)
18.00 «Адэм белэн һава» (12+)
19.00,01.30 «Таяну ноктасы» (16+)
20.00,22.00 «Вызов 112» (16+)
20.15 «Кучтэнэч» (0+)
21.00,22.10 Х/ф«НИККОЛО ПАГАНИНИ» (16+)
23.00 «Видеослорт» (12+)
03.40 «Караоке бэйге» (6+)

24 ТАТАРСТАН

0.00, 1.00, 2.00, 3.00, 4.00, 5.00, 6.00, 7.00, 8.00, 9.00, 10.00, 11.00, 12.00, 13.00, 14.00, 15.00, 16.00, 17.00, 18.00, 19.00, 20.00, 21.00, 22.00, 23.00 Новости Татарстана-24 (16+)
0.30, 1.30, 2.30, 3.30, 4.30, 5.30,13.30, 15.30, 19.30 Главные новости (16+)
6.30, 7.30, 8.30, 10.30, 16.30, 21.30 Полезные новости. Новости экономики, Суть дела с Григорием Тинским, iNews, Мобильный репортер, Справочник Туриста (16+)
9.30 Самобытные культуры (16+)
11.30, 14.30 Удивительный Мир (16+)
18.30, 22.30 Великие сражения: кровь и сталь (16+)
17.30, 20.30, 23.30 Актуальный разговор (16+)

ЧЕТВЕРГ

1 АВГУСТА

1-й КАНАЛ

05.00,09.25 «Доброе утро» (16+)
09.00,03.00 Новости (16+)
09.55 «Модный приговор» (6+)
10.55 «Жить здорово!» (16+)
12.00,15.00, 18.00 Новости (с субтитрами) (16+)
12.15,17.00,18.25,01.10 «Время покажет» (16+)
15.15 «Давай поженимся!» (16+)
16.00 «Мужское / Женское» (16+)
18.50 «На самом деле» (16+)
19.50 «Пусть говорят» (16+)
21.00 «Время» (16+)
21.30 Т/с «ДВОЕ ПРОТИВ СМЕРТИ» (12+)
23.30 «Эксклюзив» (16+)
03.05 «Время покажет» (16+)

РОССИЯ 1

05.00,09.25 Утро России (12+)
09.00,11.00,14.00,20.00 Вести (12+)
09.55 «О самом главном». Ток-шоу (12+) (12+)
11.25,14.25,17.00,20.45 Вести. Местное время (12+)
11.45 «Судьба человека с Борисом Корчевниковым» (12+)
12.50,18.50 «60 Минут». Ток-шоу с Ольгой Скабеевой и Евгением Поповым (12+)
14.45 «Кто против?» Ток-шоу (12+)
17.25 «Андрей Малахов. Прямой эфир» (16+)
21.00 Т/с «РАЯ ЗНАЕТ ВСЁ!» (12+)
23.00 Т/с «ДОКТОР РИХТЕР» (16+)
01.20 Т/с «МОСКОВСКАЯ БОРЗАЯ» (12+)
03.10 Т/с «СЕМЕЙНЫЙ ДЕТЕКТИВ» (12+)

ТНВ

5.00 «Башваткыч» (6+)
05.50,07.00,18.30,20.30 Татарстан хэбэрлэре (12+)
06.00,02.00 «Манзара» (6+)
08.00,14.30,19.30,21.30 Новости Татарстана (12+)
08.10 00 «Здравствуйте!» (12+)
09.00,00.40 Т/с «ДЕТЕКТИВНОЕ АГЕНТСТВО «ИВАН ДА МАРЬЯ» (16+)
10.00,17.00 Т/с «ТУЗГАН ТОРАКТАН КУЧКЭНДЭ» (12+)
10.55 «Ватандашлар» (12+)
11.30 «Татарлар»(12+)
12.00,23.30 Т/с «ЖИЗНЬ КЛИМА САМГИНА» (0+)
13.30 «Каравай»(6+)
14.00 Д/ф «Увлечённые люди» (12+)
14.45 «Аулак ой» (6+)
15.15 Т/с «ДЕТЕКТИВЫ ИЗ ТАБАКЕРКИ» (12+)
16.30 Мультфильмы (0+)
18.00 «Юлчы» (6+)
19.00,01.30 «Таяну ноктасы» (16+)
20.00,22.00 «Вызов 112» (16+)
20.15 «Кучтэнэч»(0+)
21.00,22.10 Х/ф «НИККОЛО ПАГАНИНИ» (16+)
23.00 Док. фильм (12+)
03.40 «Караоке бэйге» (6+)

24 ТАТАРСТАН

0.00, 1.00, 2.00, 3.00, 4.00, 5.00, 6.00, 7.00, 8.00, 9.00, 10.00, 11.00, 12.00, 13.00, 14.00, 15.00, 16.00, 17.00, 18.00, 19.00, 20.00, 21.00, 22.00, 23.00 Новости Татарстана-24 (16+)
0.30, 1.30, 2.30, 3.30, 4.30, 5.30 Главные новости (16+)
6.30, 7.30, 8.30, 10.30, 16.30, 21.30 Полезные новости. Новости экономики, Суть дела с Григорием Тинским, iNews, Мобильный репортер, Дела судебные (16+)
9.30, 12.30 Самобытные культуры (16+)
11.30, 14.30 Удивительный Мир (16+)
13.30, 15.30, 19.30 Жилищно-коммунальные Советы (16+)
17.30, 20.30, 23.30 Актуальный разговор (16+)
18.30, 22.30 Великие сражения: кровь и сталь (16+)

ПЯТНИЦА

2 АВГУСТА

1-й КАНАЛ

05.00,09.25 «Доброе утро» (16+)
09.00 Новости (16+)
09.55 «Модный приговор» (6+)
10.55 «Жить здорово!» (16+)
12.00,15.00, 18.00 Новости (с субтитрами) (16+)
12.15,17.00,18.25 «Время покажет» (16+)
15.15 «Давай поженимся!» (16+)
16.00 «Мужское/Женское» (16+)
18.50 «На самом деле» (16+)
19.50 «Поле чудес» (16+)
21.00 «Время» (16+)
21.30 «Три аккорда» (16+)
23.20 «Вечерний Ургант» (16+)
00.15 Х/ф «ПОДАЛЬШЕ ОТ ТЕБЯ» (16+)
02.40 «Про любовь» (16+)
03.25 «Наедине со всеми» (16+)

РОССИЯ 1

05.00,09.25 Утро России (16+)
09.00,11.00,14.00,20.00 Вести (16+)
09.55 «О самом главном». Ток-шоу (12+)
11.25,14.25,17.00,20.45 Вести. Местное время (16+)
11.45 «Судьба человека с Борисом Корчевниковым» (12+)
12.50,18.50 «60 Минут». Ток-шоу с Ольгой Скабеевой и Евгением Поповым (12+)
14.45 «Кто против?» Ток-шоу (12+)
17.25 «Андрей Малахов. Прямой эфир» (16+)
21.00 Х/ф «ДОМРАБОТНИЦА» (12+)
01.10 Х/ф «У РЕКИ ДВА БЕРЕГА» (12+)

ТНВ

05.00 «Халкым минем...» (12+)
05.25,10.55 «Нэсыйхэт» (6+)
05.50,07.00,18.30,20.30 Татарстан хэбэрлэре (12+)
06.00 «Манзара». хэбэрлэре(6+)
08.00,14.30,19.30,21.30 Новости Татарстана (12+)
08.10 «Здравствуйте!» (12+)
09.00 Т/с «ДЕТЕКТИВНОЕ АГЕНТСТВО «ИВАН ДА МАРЬЯ» (16+)
10.00,17.00 Т/с «ТУЗГАН ТОРАКТАН КУЧКЭНДЭ» (12+)
11.30 «Татарлар» (12+)
12.00 Док. фильм (12+)
13.00 «Башваткыч» (6+)
14.00 «Актуальный ислам» (6+)
14.15 «Если хочешь быть здоровым...» (12+)
14.45 «Аулак ой» (6+)
15.15 Т/с «ДЕТЕКТИВЫ ИЗ ТАБАКЕРКИ» (12+)
16.30 Мультфильмы (0+)
18.00 «Туган жир» (12+)
19.00 Д/ф «Яшел маршрут» (12+)
20.00,22.00 «Вызов 112» (16+)
20.15 «Кучтэнэч» (0+)
21.00 «Адэм белэн пава» (6+)
22.10 «Сэхнэдэш»(12+)
23.10 «ИТАЛЬЯНЧА НИКАХ» («Брак по-итальянски») (12+)
01.00 «ИГЪЛАН БУЕНЧА ТАНЫШУ» («Знакомство по брачному объявлению») (18+)

24 ТАТАРСТАН

0.00, 1.00, 2.00, 3.00, 4.00, 5.00, 6.00, 7.00, 8.00, 9.00, 10.00, 11.00, 12.00, 13.00, 14.00, 15.00, 16.00, 17.00, 18.00, 19.00, 20.00, 21.00, 22.00, 23.00 Новости Татарстана-24 (16+)
0.30, 1.30, 2.30, 3.30, 4.30, 5.30 Жилищно-коммунальные Советы (16+)
6.30, 7.30, 8.30, 10.30, 16.30, 21.30 Полезные новости. Новости экономики, Суть дела с Григорием Тинским, iNews, Мобильный репортер, Дела судебные (16+)
9.30, 12.30 Путешествия по городам с историей (16+)
11.30, 14.30 Удивительный Мир (16+)
13.30, 15.30, 19.30 Главные новости (16+)
17.30, 20.30, 23.30 Актуальный разговор (16+)
18.30, 22.30 Великие сражения: кровь и сталь (16+)

СУББОТА

3 АВГУСТА

1-й КАНАЛ

05.00,06.10 «Научи меня жить» (16+)
06.00 Новости (16+)
07.00 Х/ф «В ЗОНЕ ОСОБОГО ВНИМАНИЯ» (0+)
09.00 «Играй, гармонь любимая!» (12+)
09.45 «Слово пастыря» (0+)
10.00,12.00 Новости (с субтитрами) (16+)
10.15 «Юлия Меньшова. Я сама» (12+)
11.10 «Наедине со всеми» (16+)
12.15 «Лев Лещенко. «Ты помнишь, плыли две звезды...» (16+)
13.15 Концерт Льва Лещенко(12+)
15.20 «Лев Лещенко. Ни минуты покоя» (16+)
18.00 «Кто хочет стать миллионером?» (16+)
19.30,21.20 «Сегодня вечером» (16+)
21.00 «Время» (16+)
23.00 Х/ф «ДЖОЙ» (16+)
01.20 Х/ф «СЛОВО ПОЛИЦЕЙСКОГО» (16+)
03.15 «Про любовь» (16+)

РОССИЯ 1

05.00 «Утро России. Суббота» (12+)
08.15 «По секрету всему свету» (12+)
08.40 Местное время. Суббота (12+)
09.20 «Пятеро на одного» (12+)
10.10 «Сто к одному». Телеигра (12+)
11.00,20.00 Вести (12+)
11.20 Вести. Местное время (12+)
11.40 «Смеяться разрешается». Юмористическая программа (12+)
14.00 Х/ф «ХОРОШИЙ ДЕНЬ» (12+)
16.00 Х/ф «ПОЗОВИ, И Я ПРИДУ» (12+)
20.30 Х/ф «МИШЕЛЬ» (12+)
00.35 Х/ф «У РЕКИ ДВА БЕРЕГА. ПРОДОЛЖЕНИЕ» (12+)

ТНВ

05.00 Концерт (6+)
07.00 «Sина Миннэн Sэлам» (6+)
09.00 Мультфильмы (0+)
09.30 «Адэм белэн пава» (6+)
10.00 «Кайнар хит»(12+)
11.00 Д/ф «Яшел маршрут» (12+)
11.30 «Секреты татарской кухни» (12+)
12.00 «Каравай»(6+)
12.30 «Видеоспорт» (12+)
13.00 Концерт «Уткэннэр сагындыра» (6+)
14.00 «Йороктон - йорэккэ». Эхэт Гаффар (6+)
15.00 «Мин» (12+)
15.30 «Юлчы» (6+)
16.00,01.20 Х/ф «С?ЕР КЕШЕ» (12+)
18.00 «Кэмит жэвит». (16+)
19.00 «Халкым минем...» (12+)
19.30,21.30 Новости в субботу (12+)
20.00 «Адымнар» (12+)
20.30 «Жырлыйк эле!» (6+)
22.00 Х/ф «УДАЧА НАПРОКАТ» (12+)
23.35 Х/ф «ДИКАРЬ» (18+)
02.50 «Йорэктон - йорэккэ» (6+)

24 ТАТАРСТАН

0.00, 1.00, 2.00, 3.00, 4.00, 5.00, 6.00, 7.00, 8.00, 9.00, 10.00, 11.00, 12.00, 13.00, 14.00, 15.00, 16.00, 17.00, 18.00, 19.00, 20.00, 21.00, 22.00, 23.00 Новости Татарстана-24 (16+)
5.30 Главные новости (16+)
06.30, 07.30, 08.30, 09.30, 10.30 Самобытные культуры (16+)
11.30 Мобильный репортер (16+)
12.30, 17.30 Суть недели с Григорием Тинским (16+)
14.30, 19.30 Суть дела. Итоги с Григорием Тинским (16+)
13.30, 15.30, 19.30 Главные новости (16+)
15.30, 21.30 INews за неделю (16+)
16.30, 20.30 Хроника происшествий (16+)
16.50, 20.50 Крутящий момент (16+)
18.30,23.30 Мобильный репортер за неделю (16+)

ВОСКРЕСЕНЬЕ

4 АВГУСТА

1-й КАНАЛ

05.40 Т/с «НАУЧИ МЕНЯ ЖИТЬ» (16+)
06.00 Новости (16+)
06.10 «Научи меня жить» (16+)
07.45 «Часовой» (12+)
08.15 «Здоровье» (16+)
09.20 «Непутевые заметки» (12+)
10.00,12.00 Новости (с субтитрами) (16+)
10.15 «Жизнь других» (12+)
11.10,12.15 «Видели видео?» (6+)
12.50 «Наталья Кустинская. Красота как проклятье» (12+)
13.45 «Три плюс два». Версия курортного романа» (12+)
14.40, 01.30 Х/ф «ТРИ ПЛЮС ДВА» (0+)
16.35 «КВН». Премьер-лига(16+)
18.00 «Точь-в-точь» (16+)
21.00 «Время» (16+)
21.50 Т/с «ПОМЕСТЬЕ В ИНДИИ» (16+)
23.40 Х/ф «ВИКТОР» (16+)
03.25 «Про любовь» (16+)
04.10 «Наедине со всеми» (16+)

РОССИЯ1

05.05 Т/с «СВАТЫ» (12+)
07.20 «Семейные каникулы» (12+)
07.30 «Смехопанорама» (12+)
08.00 Утренняя почта (12+)
08.40 Местное время. Воскресенье (12+)
09.20 «Когда все дома с Тимуром Кизяковым» (12+)
10.10 «Сто к одному». Телеигра (12+)
11.00 Вести (12+)
11.20 Премьера. «Панацея по контракту». Расследование Аркадия Мамонтова (12+)
12.20 Т/с «ТОЧКА КИПЕНИЯ» (12+)
20.00 Вести (12+)
22.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьёвым» (12+)
01.00 «Действующие лица с Наилей Аскер-заде»(12+)
01.55 Х/ф «В ПАРИЖ!» (12+)

ТНВ

05.00 Концерт «Уткэннэр сагындыра» (6+)
08.00,13.00 «Адымнар» (12+)
08.30 М/с «Радость восхождения» (6+)
09.00 «Здоровая семья: мама, папа и я» (6+)
09.15 «Тамчы-шоу» (0+)
09.45 «Яшьлэр тукталышы» (12+)
10.15 «Мин» (12+)
10.45 Концерт (6+)
11.30 «Секреты татарской кухни» (12+)
12.00 «Каравай»(6+)
12.30,01.20 «Яшел маршрут» (12+)
13.30 Р. Батулла. «Зэйтунэкэй». Г. Кариев исемендэге татар дэулэт яшь тамашачылар театры спектакле (12+)
15.00,00.30 «Ком сэгате» (12+)
16.00 «Жырлыйк эле!» (6+)
17.00 «Видеоспорт» (12+)
17.30 «Эдэби хэзинэ» (12+)
18.00 «Башваткыч» (6+)
19.00,22.00 «Семь дней». (12+)
20.15 «Батырлар» (12+)
20.30 «Болгар радиосы» концерты (6+)
21.00 «Эй, язмыш, язмыш...» (12+)
23.00 Х/ф «ПРЕЖДЕ, ЧЕМ ТЫ СКАЖЕШЬ ДА» (12+)
02.00 «Манзара»(6+)
03.40 «Караоке бэйге» (6+)

24 ТАТАРСТАН

0.00, 1.00, 2.00, 3.00, 4.00, 5.00, 6.00, 7.00, 8.00, 9.00, 10.00, 11.00, 12.00, 13.00, 14.00, 15.00, 16.00, 17.00, 18.00, 19.00, 20.00, 21.00, 22.00, 23.00 Новости Татарстана-24 (16+)
0.30, 1.30, 2.30, 3.30, 4.30, 5.30, 14.30, 21.30 Главное за неделю (16+)
6.30, 7.30, 8.30, 9.30, Великие сражения: кровь и сталь (16+)
10.30 Око прокурора (16+)
10.45 15.30, 20.30 Хроника происшествий (16+)
11.30, 13.30, 17.30 INews за неделю (16+)
12.30, 19.30 Мобильный репортер за неделю (16+)
15.50, 20.50 Крутящий момент (16+)
16.30, 22.30 Суть недели с Григорием Тинским (16+)
18.30, 23.30 Суть дела. Итоги с Григорием Тинским (16+)

верук тĕпелĕ

АБРИКОС КОМПОЧĔ

Абрикоса лайăх çумалла, хут алшăллипе типĕтмелле. Банкăсене çуса пăс çинче стерилизацилемелле те абрикос тултармалла. Шыв çине сахăр песокĕ хушса сироп вĕретмелле. Вĕриллех абрикос тултарнă банкăна ямалла. Хупкăçпа витсе сивĕниччен тытмалла. Сироп сивĕнсен ăна асăрхануллăн калле кастрюле ярса илмелле те тепĕр хут вĕретмелле. Каллех банкăна ямалла. Сивĕнсен тепĕр хут кастрюле ярса илсе вĕретмелле, каллех банкăна ямалла. Корица хушмалла. Металл хупкăçпа хупласа пуçхĕрлĕ çавăрса лартмалла. Хулăн япалапа чĕркесе сивĕниччен тытмалла. Кайран сулхăн çĕрте упрамалла.

2 кг абрикос, 1 кг сахăр песокĕ, 3 л шыв, 3 чĕптĕм корица кирлĕ.

ЙĔПЛĔ ХУРЛĂХАН ВАРЕНИЙĔ

Йĕплĕ хурлăхан çырлине çӳп-çапран тасатса çумалла, сăрăхтармалла. Апельсина çумалла, вăррисене кăларса илмелле, хуппипе пĕрлех турамалла. Йĕплĕ хурлăханпа апельсина мясорубка витĕр кăлармалла. Кастрюле ярса сахăр песокĕ хушмалла та вĕреме кĕнĕ хыççăн пăтраштарса тăрса 30 минут пĕçермелле. Вĕриллех стерилизациленĕ банкăсене тултарса хупламалла, сулхăн çĕрте упрамалла.

1 кг йĕплĕ хурлăхан çырли, 1,5 кг сахăр песокĕ, 4 апельсин кирлĕ.

кĕрешĕнсен питравĕ

*ТР ПК пресс-службин тата **Р.Гали** сăнӳкерчĕкĕсем.*

Саламлатпăр!

*«Сувар» хаçатăн ветеранне, пултаруллă чăваш хĕрарăмне, Хусанта пурăнакан **Людмила Егоровна АНТИПОВĂНА** çуралнă кун ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Тĕнчери мĕнпур ырăрине сунатпăр сире – тулăх пурнăç, тулли телей те ăнăçу. Яланах хаваслă та ыррă, чунăрпа çамрăк пулăр, чиперрĕн мĕнне пĕлмесĕр нумай-нумай çул сывă пурăнмалла пултăр.*

Çулсем иртни ан кӳтĕр тунсăх,
Вăй-халăр пултăр иксĕлми.
Сире савса сунатпăр ырлăх-сывлăх,
Утсамăр пурнăç çулĕпе пĕр такăнми.

Суварçăсем.

*Нурлат районĕнчи Ключи поселокĕнче пурăнакан **Вера Алексеевна СИНЦОВĂНА** 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр! Иксĕлми вăй-хал, çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм ĕмĕр, тулли телей сунатпăр, çакă çутă тĕнчере нумай-нумай çул сывă пурăнмалла пултăр. Питу çинчен йăл кулă ан кайтăр, ĕмĕтӳсем пурнăçлансах пыччăр.*

Чи илемлĕ сăмахсем калатпăр,
Чĕререн сана сума суса.
Ырлăх-сывлăх, телей çеç сунатпăр,
Пурăнса çитсем эс çĕр çула.

Ывăлĕ Петр тата кинĕ Людмила.

каштах кулăш

Чăнкă Мирун килне таврăнать те арăмĕ тĕкĕр умĕнче çĕнĕ хăлха çакки пăхса ларнине курать.

– Мĕнле, чаплă-и? – ыйтать хĕрарăм.

– Тĕлĕнмелле чипер. Кам парнелерĕ? – кăсăкланать упăшки.

– Кам парнелетĕр ĕнтĕ мана сансăр пуçне? Çур çул тархаслатăп çак эрешсем пирки, ялан укса çук тетĕн. Паян ак, çуралнă кун, чăтаймарăм, хама сан ятунтан парне тăвас терĕм. Сан ĕçне кĕтĕм те пиншакунтан сакăр çĕр доллар кăларса илтĕм, – тет арăмĕ.

– Тĕрĕс тунă, эпĕ унта виçĕ уйăх ĕçлеместĕп ĕнтĕ, – каласа хучĕ тет Мирун.

* * *

Кирлĕ ĕçпе уеса кайсан Кукша Кĕркури ялĕнчен 25 çухрăмри паллакан пуян Çăткăн Уçăп патне çĕр каçма чарăнать.

– Уесран таврăнап терĕн. Ывăнса та çитрĕн ахăр. Санăн мĕн, шыв ĕçес е çывăрас килет-и? – ыйтать чее пуян.

Апат пирки пĕр сăмах та асăнманнине кура Кĕркури те чееленме шутлать:

– Кӳршĕ ялта пусă патĕнче чарăнса шыв ăсрăм та чĕрĕк витре чухлех ĕçрĕм. Питĕ лайăх пулса кайрĕ, ута-ута ывăнса кайнине туймарăм. Сак çине лартăм та хам та сисмерĕм, тăраниччченех çывăрнă, – тесе хучĕ тет вăл.

* * *

Кукша Кĕркури пулла кайсан пысăк çуйăн тытса килет, арăмне ăна ăшалама хушать. Хăй, ывăнса çитнĕскер, кутник çине ларать те сисмесĕрех çывăрса каять. Арăмĕ пулла ăшалать, анчах, тутлă шăрша чăтаймасăр, пĕчченех çисе ярать. Упăшкине вăратмасть, унăн аллисемпе тутине пулă ăшаланă çупа сĕрсе ярать. Каштахран Кукша вăранать, пулă ыйтать.

– Çисе ятăн вĕт эс пулла, мĕн, манса кайрăн-им? Ĕненмесен аллусене шăршласа пăхсам, – тет арăмĕ.

Кĕркури аллисене шăршлать, пуçне пăркалать:

– Чăнах та пулă шăрши кĕрет, апла чăнах та пулă çинĕ эпĕ. Çавах та пушă хырăм çакна йышăнасшăн мар-çке, – тесе хучĕ тет ним калама аптăранăскер.

Евгений ТУРХАН хатĕрленĕ.

Учредитель: АО «ТАТМЕДИА» **сăвар – чăвашсен сĕм авалхи ячĕ** **www.suvargazeta.ru** **Тел. рекламной службы: 89178973890**

«СУВАР» республиканская газета на чувашском языке

И.о. руководителя – главного редактора филиала АО «ТАТМЕДИА» И.Ф. Трифонова Тел.: 222-09-84 (16 04)

Адрес редакции: Республика Татарстан, г.Казань, ул. Декабристов, д. 2.
Для писем: 420066, г.Казань, а/я 64
E-mail: suvar@mail.ru
Тел: (843) 222-09-84 (17 98) журналисты (843) 222-05-44, 518-33-75 приемная
Издатель: АО «ТАТМЕДИА» 420066, г. Казань, ул. Декабристов, 2

QR код для смартфона

Газета зарегистрирована 23 марта 2011 года в Поволжском управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия. Свидетельство о регистрации ПИ № ФС7744361
Номер отпечатан в типографии филиала АО «ТАТМЕДИА» ПИК «Идел-Пресс» г.Казань, ул. Декабристов, д.2

Создано при поддержке Республиканского агентства по печати и массовым коммуникациям РТ

Тираж 1896 экз.

Дежурный по номеру Ирина Трифонова

Мнение редакции не всегда совпадает с мнением авторов. Редакция не распологает возможностью выступать ходатаем в официальных организациях. Рукописи не рецензируются и не возвращаются. За достоверность рекламных объявлений ответственность несет рекламодатель. Перепечатка материалов разрешается только с письменного согласия редакции.

Реквизиты: (сиктермесĕр çырмалла)
Филиал АО «ТАТМЕДИА» «Редакция газеты «Сувар»
Банк: ПАО «АК БАРС» БАНК г.Казань
р/сч 40702810200020010327
кор/сч 30101810000000000805
БИК 049205805 ИНН 1655144950
КПП 165802003
ОГРН 1071690057834
Стоимость поздравления до 600 знаков (с пробелами) – 600 рублей, от 600 до 1000 знаков – 1000 рублей.

Газета выходит по пятницам.
Заказ №2844
Подписные индексы газеты: в Татарстане **П2340**, в Российской Федерации **П7093**
Цена свободная.

16+